им. М. Горького
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ.

1953 çул
Июль
10
ЭРНЕКУН
№ 133 (9042)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
Чăваш АССР Министрĕсен Советĕнче (1 стр.).
РЕСПУБЛИКĂРИ ХУЛАСЕМПЕ РАЙОН ЦЕНТРĔСЕНЧЕ: Паянхи Вăрнарта (1 стр.).
СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче (2 стр.).
И. Новиков.—Парти решенийĕсене пурнăçлассишĕн активлă кĕрешмелле (2 стр.).
Çĕнĕ вĕренӳ çулне тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илер (2 стр.).
Г. Мартынов.—Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă туса пырассишĕн (3 стр.).
А. Петров.—Тырă вырма тухас умĕн (3 стр.).
В. И. Ленин Сочиненийĕсен V-мĕш томĕ Румыни чĕлхипе пичетленсе тухнă (3 стр.).
Шанхайра И. В. Сталин Сочиненийĕсен пĕррĕмĕш томне çыръанса илеççĕ (3 стр.).
Улан-Батор—Монголи Халăх Республикин столици (3 стр.).
Ли Сын Ман çĕнĕ провокацисем хатĕрлет (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Китайпа Англи хушшинчи суту-илӳ çыхăнăвĕсем пирки (4 стр.)
Австрипе Болгари суту-илӳ договорĕ тунă (4 стр.).
Хĕвеланăç Германири хресченсен съезчĕ (4 стр.).

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕклĕ хатĕрлер

Выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçре чи ответлă тапхăр пуçланчĕ. Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев организацийĕсен, МТС-сен тата колхоз руководителĕсен çак ĕçе тĕплĕн организацилеса пулать. Партипе совет организацийĕсен обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес ĕç мĕнле пынине куллен ертсе пымалла тата тĕрĕслесе тăмалла. Тырпул пухса кĕртме тухиччен кашни колхозăн утă çулса пуçтарса кĕртмелле, государствăна утă парса татмалла, силос хывмалли плана 80 процентран кая мар тултармалла.

Улăх-çаран утисем, акнă курăксем кăçал вăйлă çитĕнсе пулчĕç. Халĕ республикăри колхозсем утă çулаççĕ, силос хываççĕ. Анчах чылай колхозсем, МТС-сем çак ĕçе ытла та япăх хатĕрленсе тытăнчĕç. Çавăнпа ĕнтĕ пирвайхи 10 кун хушшинче ĕç тухăçлăхĕ ытла та пĕчĕккĕ пулчĕ. Июлĕн 5-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозсем утă çулса пухмалли плана 33 процента яхăн, акнă курăксене çулса пухмалли плана 18 процент, силос хывмалли плана 5 процент кăна тултарнă. Канаш, Советски, Шăмăршă, Хĕрлĕ Чутай районĕсем уйрăмах кая юлса пыраççĕ. Канаш районĕнчи колхозсем ку тарана çитсе те утă, акнă курăксем çулма тытăнманпа пĕрех, силос хывмалли плана 1,6 процент кăна тултарнă. Кунта МТС машинисемпе пачах ĕçлемеççĕ. Советски, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă районĕсенче те çакнашкалах.

Мĕнрен килет-ха çакăн пек япăх ĕçлени? Тӳрех калас пулать, выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлес ĕçе ялхуçалăх органĕсемпе колхоз руководителĕсем кирлĕ пек хакламаççĕ. Хăшпĕр районсенчи партипе совет организацийĕсем те ку ыйту çине тимлĕн пăхмаççĕ. Чăваш АССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви тата унăн МТС управленийĕ выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе тивĕçлипе организацилесе ертсе пымаççĕ. Çак çитменлĕхсене пĕтерме васкавлă мерăсем йышăнмасан, выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе пирĕн умма пысăк хăрушлăх туха тăма пултарать.

Кăçал выльăх апачĕ нумайтарах хатĕрлеме пур майсем те çителĕклĕ. Çав майсемпе усă курсан, кашни колхоз планпа пăхниччен чылай ытларах выльăх апачĕ хатĕрлесе хума пултарать. Ăна малта пыракан колхозсен пуçарăвĕ лайăх кăтартса парать. Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозри Н. Зайцева коммунистка ертсе пыракан бригада вицĕ кун хушшинче 373 тонна силос хывса, плана ирттерсе тултарнă. Çак колхозра В. Григорьев юлташ ертсе пыракан трактор бригадинчи механизаторсем ХТЗ трактортан 3 косилка кăкарса утă çулаççĕ. Çакă ĕç тухăçлăхне ӳстерме нумай пулăшнă.

Кăçал, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, МТС машинисемпе икĕ хута яхăн ытларах силос культурисем пухса кĕртсе вĕтетсе памалла. Анчах нумай МТС-сем колхозсемпе тунă договорта палăртнă ĕçсене пурнăçламаççĕ. МТС-сен машинăсем тата ытти оборудовани нумай. Пирĕн опытлă трактористсемпе машинистсем те сахал мар. Механизаторсен тивĕçĕ—техникăпа туллин усă курасси.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе партипе правительство ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăсенчен пĕри тесе шутлаççĕ. МТС-сен тырпул туса илнĕ чухнехи пекех, выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçре те колхозсене тăтăшах пулăшмалла. Договорта палăртнă ĕçсене пурне те вăхăтра пурнăçламалла. Машинăсемпе курăк çулниччен пуçласа, ăна капана хывиччен, силос массине çулса пуçтарса, ăна вĕтетсе шăтăка тата башняна хывса çитеричченех тухăçлă ĕçлемелле.

Выльăх апачĕ хатĕрлевĕнче пур майсемпе те усă курни кирлĕ. Трактор косилкисем çитмессĕ пулсан, трактортан лашапа ĕçлемелли косилкăсене кăкарса çулмалла. Утă çулнă тата силос хывнă çĕрте сехет графикĕ тăрăх ĕçлени пысăк пулăшу парать, вăл ĕçе хăвăртлатать.

Трактор агрегачĕсемпе тухăçлă усă курас тесен, унта ĕçлеме машинистсем, колхозниксем çителĕклĕ уйăрмалла. Вĕсене сменăри нормăсене ирттерсе тултарма условисем туса памалла, ĕçре хавхалантарса пымалла. Машинăсем валли запаслă пайсем, çава-çĕçĕсене хăйраса тупмалли хатĕрсем вырăнта çителĕклĕ пулмалла. Ялсенчен инçерех çĕрте ĕçлекенсем валли столовăйсем организацилемелле.

Утă çулса пухнă чухне пур колхозниксене те ĕçе явăçтармалла. Колхозниксене, МТС работникĕсене улăх-çаран утти çулса пухса капана хывнăшăн, ĕçкунĕ тӳленисĕр пуçне, пухнă утăран 10-мĕш пайне параççĕ. Трактористсемпе прицепщиксене утă çулса, ăна пухса капана хывмалли задание ирттерсе тултарнăшăн тата пĕтĕм ĕçе договорпа пăхнă срокра, агротехника правилисене пăсмасăр тунăшăн 40 процент таран ĕçкунĕ ӳстерсе пама юрать. Кун çинчен колхозниксене лайăх ăнлантарса памалла.

Кашни колхозра силос сооруженисем çителĕклĕ пулмалла. Силос хывмалли правилăсене пăсма юрамасть. Çулнă курăка çийĕнчех турттарса вĕтетмелле тата башнясене хывма тытăнмалла. Шăтăка е башняна хывнă силоса вăхăтра тата тĕплĕн витмелле.

Каярах çулса силос хывмалли культурăсене пăхса ӳстерессипе çине колхозсен уйрăмах тимлĕн пăхмалла. Кунсăр пуçне чылай колхозсем çулсем хĕрринче, çырма-çатрасенче ӳсекен курăксемпе анлăн усă кураççĕ.

Чылай колхозсене вăрман хуçалăхĕсем выльăх апачĕ хатĕрлеме вăрманта участоксем уйăрса панă. Анчах вăрман хуçалăхĕсен хăшпĕр руководителĕсем колхозсене курăк сахал ӳсекен участоксем уйăрса панă. Ку тĕлĕшпе Çĕрпӳ вăрман хуçалăхĕ правительство кăтартса панă йĕркесене сĕмсĕррĕн пăсать. Курăк лайăх ӳснĕ участоксене вăл вăрман работникĕсем валли уйăрса хăварать.

Курăксене кĕске срокра пухса кĕртмелле. Кая юлса çулса типĕтнĕ утăн пахалăхĕ, тухăçлăхĕ чакать, тăкаксем те нумай пулаççĕ. Çавăн пек ан пултăр тесен, курăксене чечеке лариччен, пĕтĕм лаптăкра çитĕннине кĕтмесĕрех çулма тытăнмалла.

Колхозниксемпе колхозницăсем, МТС работникĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем хушшинче обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарассишĕн тата выльăхсенчен илекен тухăçлăха ӳстерессишĕн пыракан социализмла ăмăрту куллен сарăлать. Вĕсем тăванла республикăсем хушшинчи ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешеççĕ. Халĕ утă çулса пухасси, силос хывасси пысăк та кирлĕ ĕçсем пулса тăраççĕ. Партипе совет организацийĕсен çак ĕçсене тырпул пухса кĕртме тытăниччен пурнăçлама колхозлă ял ĕçченĕсене мобилизацилемелле. Выльăх апачĕ хатĕрлемелли плана тултарассишĕн, государствăна утă вăхăтра парса татассишĕн колхозсемпе МТС-сем хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сарассишĕн тăрăшмалла.

Л. Н. Толстой çуралнăранпа 125 çул тултарнă тĕле

Кăçалхи сентябрь уйăхĕнче вырăссен аслă писателĕ Л. Н. Толстой çуралнăранпа 125 çул тултарать. Совет общественноçĕ çак чаплă юбилее анлăн палăртма хатĕрленет. Июлĕн 7-мĕшĕнче К. А. Федин ертсе пынипе юбилей комиссийĕн ларăвĕ пулнă. Ларура юбилей ирттерессипе çыхăнса тăракан ĕçсем çинчен сӳтсе явнă.

Ларура ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн, ВЦСПС, СССР Наукăсен академийĕн, издательствăсен, СССР Культура министерствин искусство ĕçĕсен тĕп управленийĕн, Пĕтĕм Союзри политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем саракан общество представителĕсем тухса каланă.

Мускаври, Ленинградра, Киевра тата ытти нумай хуласенче ʻсавăнăçлă пухусем пулса иртеççĕ. Клубсемпе культура çурчĕсенче аслă писатель ячĕпе литература каçĕсем ирттереççĕ. СССР Наукăсен академийĕ тата ытти наука учрежденийĕсем ятарласа сессисем пухаççĕ. Библиотекăсенче Л. Н. Толстой пурнăçĕпе ĕçне кăтартакан выставкăсем организацилеççĕ, лекцисем ирттереççĕ.

Çĕршыври издательствăсем Л. Н. Толстой кĕнекисене кăларма хатĕрленеççĕ.

Л. Н. Толстой юбилейне театрсем активлă хатĕрленеççĕ. Вĕсем унăн романĕ тăрăх çырнă пьесăсене лартса параççĕ.

(ТАСС).

Утă çулас ĕç ăнăçлă пырать

КУВАКИНО. Районти колхозсенче утă çулас ĕç ăнăçлă пырать. Колхозсем 2.100 гектар ытла улăх утти, 550 гектар ытла нумай çул ӳсекен курăксем çулнă. Киров ячĕпе тăракан колхозра 408 гектар çинче улăх утти, 116 гектар çинче клевер, Ленин ячĕпе тăракан колхозра—275 гектар çинче улăх утти, 110 гектар çинче клевер, Жданов ячĕпе тăракан колхозра 274 гектар çинче улăх утти çулса пуçтарнă. Утă çулас ĕçе кăçал пĕлтĕрхинчен чылай лайăхрах механизациленĕ, ку вăл утă çуласине хăвăртлатма май парать. Курăксене çулнă çĕрте трактор косилкисем, трактор кĕреплисем 25 ĕçлеççĕ. Сурмайдан МТС-ĕ трактор косилкисемпе 500 гектара яхăн утă çулчĕ, 200 гектар ытла çĕр лаптăкĕ çинче утă пухрĕ. Курăксене çулнипе пĕр вăхăтрах утта капана хываççĕ. Паянхи куна МТС 1.500 гектар çинчи утăпа курăка капана хывнă.

Утă, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, чылай ытларах тухать.

Районти колхозниксемпе механизаторсем çаран курăкĕсене тата акнă курăксене тырă вырма тухиччен çулса пĕтерессишĕн ырми-канми тăрăшса ĕçлеççĕ.

Р. АВАНСКИЙ.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

Ленинград. Невски проспект.

П. ФЕДОТОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Магнитогорскра хурçă шăратма тытăннăранпа 20 çул çитнĕ

МАГНИТОГОРСК, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Паян металлургсем Магнитогорскра хурçă шăратма пуçланăранпа 20 çул çитнине палăртнă. Савăнăçлă ларăва пĕррĕмĕш мартен цехĕн коллективĕпе пĕрле 1933 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче ирхине малтанхи хут хурçă шăратса кăларнă рабочисем пухăннă. Вĕсем хушшинче аслă мастерсем: Елькин тата Нечкин юлташсем, инженерсем—Ягнюк, Трифонов тата ытти юлташсем.

Магнитогорскра ĕçлекен рабочисем тĕрлĕ йышши пысăк пахалăхлă хурçă шăратса кăлараççĕ. Мартен кăмакисем автоматсемпе ĕçлесе тăраççĕ. Юлашки çулсем хушшинче йывăр ĕçсене механизацилесе çитернĕ.

Техникăпа усă курассине лайăхлатнипе, малта пыракан ĕç меслечĕпе усă курнипе пĕррĕмĕш мартен цехĕнче ĕçлекен рабочисен коллективĕ кашни хут вăтам шутпа 6 тонна хурçă шăратса кăларать. Хурçă шăратса кăлармалли вăхăта пĕр сехет чухлĕ чакарнă. Планран ирттерсе пиншер тонна хурçă шăратса кăларнипе цех коллективĕ кăçал пĕр миллион тенкĕ перекетленĕ.

Магнитогорскра хурçă шăратма тытăннăранпа 20 çул тултарнине кашни бригада хурçă шăратмалли ĕçе хăвăртлатнипе палăртнă.

Апат-çимĕç промышленноçĕнчи çĕнĕ предприятисем

НОВОСИБИРСК, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Облаçри пилĕк хулара—Купино, Татарск, Барабинск, Искитим, Болотнăй хулисенче кондитерски фабрикăсем тăваççĕ. Çак фабрикăсенчи печени пĕçерекен цехсем çулталăкра 800—1.500-шер тонна продукци туса параççĕ. Новосибирск тата Искитим хулисенче çавăн пекех тата сăра завочĕсем тăваççĕ.

Бараба çĕçенхирĕнчи районсенче çу завочĕсем 40 яхăн туса лартаççĕ.

СИЧĔ УЙĂХРИ ПЛАНА ТУЛТАРНĂ

ГРОЗНЫЙ, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Грозный хулинчи геологипе разведка кантурĕ нефть кăларма шăтăксем пăраламалли çичĕ уйăх планне тултарни çинчен пĕлтернĕ. Çĕнĕ техника тата лайăх технологи нефть кăлармалли шăтăксем пăраламалли плана 24,3 процент ирттерсе тултарма май панă. Çĕршер пин тенкĕ укçа перекетленĕ.

УДЭГЕ ЯЛĔНЧЕ

Сăртсем хушшипе юхса тухакан Гвасюгинка юханшывĕ хĕррине 1933 çулхи çуркунне пĕчĕк кимĕсем пырса чаръннă. Кунта удэгеец-платниксен бригади килнĕ. Часах Були шывĕ юхса тухакан вырăн патĕнче пĕр çурт туса лартнă. Çапла пуçланса кайнă Гвасюги ялĕ.

Унтанпа 20 çул иртнĕ. Гвасюги халĕ питĕ илемлĕ ял. Кунта пурăнмалли пысăк çуртсем, çичĕ çул вĕренмелли шкул, клуб, магазин, ача ясли, почта, медицина пунктĕ, пекарня туса лартнă. Хальхи пилĕкçуллăх вĕçленнĕ тĕле Гвасюги ялĕнче электростанци, тепĕр клуб, радиоузел туса лартаççĕ.

Гвасюги ялĕнче пурăнакансем—авалтан сунар ĕçĕпе пурăннă çынсем. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсем хăйсен колхозне «Ударный охотник» тесе ят панă. Ялта ăста сунарçăсем нумай. Вĕсем хушшинче Бянка Мядигович Кялундзюга чи лайăх сунарçă шутланать.

Бянка Мядигович 68 çулта. Вăл 50 çул хушши ĕнтĕ сунара çӳрет. Хăйĕн ĕмĕрĕнче 300 упа, пиншер сăсар тата ытти тискер кайăк тытнă. Иртнĕ çул вăл тискер кайăк тытмалли плана 500 процент ытла тултарнă.

Сунар ĕçĕпе пурăнакан колхозниксем ялхуçалăх ĕçĕсене те тăваççĕ—çĕрулми, пахча çимĕç лартса ӳстереççĕ, ĕне выльăх ĕрчетеççĕ. Юлашки çулталăк хушшинче ĕне, выльăх йышĕ пĕр хут çурă ӳснĕ.

Ял çыннисем пахча çимĕççĕм ӳстерекен бригада бригадирне Надежда Ивановна Кимонко юлташа питĕ хисеплеççĕ. Вăл кашни çул хăйне панă задание ирттерсе тултарать. Гвасюги ялĕнчи ĕçсыннисем Надежда Ивановнăна ĕçсынни депутачĕсен район Совечĕн депутатне суйланă.

Революцийченхи вăхăтра удэге çыннисем хушшинче хут пĕлекенсем пĕр çын та пулман. Тайгара пурăнакансем кĕнеке, хаçат мĕн пулнине те пĕлмен. Халĕ удэге ачисем çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренеççĕ, чылай çамрăксем аслă шкулсене вĕренме кĕнĕ.

Кĕнеке — удэге çыннисемшĕн куллен кирлĕ япала пулса тăчĕ. Каçхине ялти библиотекăра яланах вуншар колхозник кĕнеке вуласа ларнине курма пулать. Библиотека заведующийĕ Екатерина Кимонко çĕнĕ кĕнекесем çинчен, паллă писательсемпе поэтсен пултарулăхĕ çинчен калаçусем ирттерет. Вăл каласа панине итлеме яланах халăх нумай пухăнать.

Пуян пурăнаççĕ удэгеецсем. Кăçал ултă уйăх хушшинче ялти магазин радиоприемниксем, сĕтел-пукан, çĕвĕ çĕлемелли машина тата ытти таварсем иртнĕ çулхинчен 150 пин тенкĕлĕх ытларах сутнă.

Инçетри тайгари ялта пурăнакан колхозник-удэгеецсем, мĕнпур совет çыннисем пекех, тулăх пурнăçпа пурăнаççĕ.

(ТАСС).

Чăваш АССР Министрĕсен Советĕнче

Районсем тата çул-йĕр участокĕсем çул-йĕр строительстви тĕлĕшпе иккĕмĕш кварталта ăмăртса ĕçлени çинчен

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. 1953 çулхи çул-йĕр строительстви планне срокчен тултарассишĕн районсемпе çул-йĕр участокĕсем хушшинче пыракан социализмла ăмăртура Шупашкар районĕ мала тухнине палăртнă. Июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне район çул-йĕр строительстви валли кирлĕ материалсем хатĕрлесе турттармалли 1953 çулхи плана 133 процент, чул сарса çĕнĕ çул тумалли плана 112 процент, çĕнĕ кĕперсем, трубасем тумалли тата киввисене тĕпрен юсамалли плана 100 процент, çĕр чавса купаламалли плана 103 процент, çулсем хĕррине йывăç лартмалли плана 160 процент тултарнă.

Шупашкар райисполкомне Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне памалла тунă.

2. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ Сĕнтĕрвăрри тата Тăвай районĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

а) Сĕнтĕрвăрри районĕ материалсем турттармалли çулталăкри плана 117 процент, чул сарса çул тумалли тата чул сарнă çулсене тĕпрен юсамалли плана 100 процент, çĕнĕ кĕперсем, трубасем тумалли тата киввисене тĕпрен юсамалли плана 110 процент, тăпра купаласа çул тумалли плана 100 процент, çĕр чавса купаламалли плана 115 процент, çулсем хĕррине йывăç лартмалли плана 100 процент тултарнă.

б) Тăвай районĕ материалсем турттармалли çулталăкри плана 122 процент, чул сарса çĕнĕ çул тумалли тата киввисене тĕпрен юсамалли плана 79 процент, çĕнĕ кĕперсем, трубасем тумалли тата киввисене тĕпрен юсамалли плана 100 процент, çĕр чавса купаламалли плана 117 процент, çулсем хĕррине йывăç лартмалли плана 150 процент тултарнă.

3. Шăмăршă, Йĕпреç, Кувакино, Красноармейски районĕсем, 240-мĕш тата 242-мĕш çул-йĕр участокĕсем питĕ çителĕксĕр ĕçленине палăртнă.

Лекцисем ирттереççĕ

Улатăрти чугун çул çинче ĕçлекенсен клубĕнче партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене тата И. В. Сталинăн «СССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» произведенине вĕренес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса пыраççĕ.

Юлашки вăхăтра кунта чугун çул работникĕсем валли 34 лекци вуланă.

Республикăри хуласемпе район центрĕсенче.

Паянхи Вăрнарта

Аслă та чаплă вăрман хушшинче, питех те илемлĕ вырăнта, Вăрнар поселокĕ сарăлса ларать.

Октябрьти Социализмла Аслă революци хыççăн 1918 çулта кашласа ларакан сĕм вăрман витĕр пĕррĕмĕш хут Канашпа Мускав чугун çулĕ тăрăх поездсем иртсе кайнă. Çакăн хыççăн кунта Вăрнар чугун çул станцийĕ пулса ларнă. Ун чухне пĕтĕмпе те чугун çул вокзалĕ тата пурăнмалли вицĕ çурт кăна пулнă. 1927 çулта Вăрнар поселокĕ район центрĕ пулса тăрать. Кун хыççăн поселок хăвăрт ӳсме пуçлать. Поселокра çĕнĕ çуртсем, урамсем ӳссе лараççĕ. 1929 çулта завод туса пĕтереççĕ, çичĕ çул вĕренмелли шкул, фельдшер пункчĕ уçаççĕ.

Пĕррĕмĕш пилĕкçуллăхра Вăрнар пысăк та çĕнĕ çуртсемпе татах илемленет. Поселокра больница, вăтам шкул, клуб, ветполиклиника, МТС кантурĕпе мастерскойне тăваççĕ.

Тăван çĕршыв вăйлăн та хăватлăн аталаннипе пĕрлех, поселок та ӳссе, илемленсе пырать. Паянхи Вăрнар районăн политикăпа администраци, хуçалăхпа культура центрĕ пулса тăрать. Кунта халĕ нумай предприятисем, промысла кооперацин артелĕсем, учрежденисем пур. Поселокра завод, икĕ вăрманпромхоз, райпромкомбинат, апат-çимĕç комбиначĕ, кайăк-кĕшĕк комбиначĕ, çу завочĕ, «Заготскот», «Заготзерно», «Заготживсырье» кантурĕсем тата пысăк мар çичĕ электростанци ĕçлеççĕ.

Вăрнарта уйрăмах культурăпа медицина учрежденийĕсем нумай. Поселок центрĕнче — вăтам шкул, çичĕ çул вĕренмелли икĕ шкул тата пуçламăш шкул, районти культура çурчĕ, рабочисен клубĕсем, 8 библиотека, ялхуçалăх шкулĕ, больница, вицĕ амбулатори, ача çуратмалли çурт, рентген кабинечĕ, хĕрарăмсемпе ачасен консультацийĕ, санитарипе эпидеми станцийĕ, ачасен сĕт кухни, аптека, ача сачĕ иккĕ, ачасен яслисем тата радиоузĕл.

Поселокăн кăнтăр енче хыр вăрманĕ кашласа ларать. Çав вăрман витĕр Вăрнар шывĕ юхса выртать. Çакăнта, ытла та илемлĕ вырăнта, ачасен санаторийĕ вырнаçнă. Кунта—икĕ хутлă пысăк çуртсем, электростанци, рентген кабинечĕ, врачсен кабинечĕсем, водопровод. Ачасен санаторийĕпе юнашарах халĕ туберкулезпа чирленĕ çынсене сыватмалли çĕнĕ санатори тăваççĕ. Халĕ кунта çак санаторин пĕр пысăк корпусĕ ӳссе те ларнă.

Ачасен санаторийĕнчен инçех те мар, вăрман хĕрринче, ветеринари техникумĕ тата унăн вĕренӳ хуçалăхĕ вырнаçнă. Техникум 35 çул ĕçлет ĕнтĕ. Çав вăхăтра вăл агрономсем, зоотехниксем, веттехниксем, пчеловод-агрономсем сахал мар вĕрентсе кăларнă.

Район центрĕнче культурăллă пурнăç çăлкуç пек тапать. Районти культура çуртĕнче, заводри, «Красный кустарь» артелĕн, ветеринари техникумĕн, вăрман хуçалăхĕн клубĕсенче спектакльсем, концертсем, докладсем, лекцисем пулаççĕ, кинокартинăсем кăтартаççĕ. Поселокра районти культура çурчĕ çумĕнче, предприятисемпе промысла кооперации артелĕсенче, шкулсенче художествăлла пултарулăх коллективĕсем нумай ĕçлеççĕ. Вĕсенчен уйрăммăнах заводри художествăлла пултарулăх коллективĕ тата духовăй оркестр палăрса тăраççĕ. Вăрнарта Шупашкарти театрсем, Мускавран, Хусантан килекен артистсем спектакльсем тăтăшах лартса параççĕ.

Вăрнар Мускавран 628-мĕш километрта ларать. Мускав çакăн пек сывăхра пулни пĕтĕм поселокăн тата районти ялсен пурнăçĕнче палăрать. Вăрнарсем Мускавпа таччăн çыхăнса ĕçлеççĕ, унăн çамрăкĕсем Мускаври Ломоносов ячĕпе тăракан чи чаплă университетра, академисенче, институтсенче вĕренеççĕ. Поселокри ĕçсыннисем тата ялсенчи колхоз ĕçченĕсем кашни кунах радиопа Мускав сассине итлеççĕ. Мускавра пурăнакан çынсем те Вăрнар поселокне çуллахи канăва иртерме килеççĕ. Уйрăммăнах районти учительсем Мускавпа питех çывăх туслăхпа пурăнаççĕ. Вĕсем Мускаври чи лайăх шкулсенче пулаççĕ, чи лайăххисем РСФСР Çутĕç министерствин педагогика академийĕнче вĕренеççĕ, академи ирттерекен канашлусенче, семинарсенче пулаççĕ. Педагогика академийĕн профессорĕсемпе наука работникĕсем икĕ çул ĕнтĕ Вăрнар тата районти шкулсен ĕçĕсене тĕпчесе вĕренеççĕ, учительсене ĕçре пысăк пулăшу парса пыраççĕ.

Вăрнарта суту-илӳ ĕçĕ анлăн сарăлса кайнă. Кунта раймаг, сельмаг, культмаг, КОГИЗ магазинĕ, заводри универмаг, вăрманпромхоз ОРС-ĕн промтоварĕсемпе апат-çимĕç продукчĕсем сутмалли магазинсем тата 20 ытла тĕрлĕрен лавккесемпе ларексем ĕçлеççĕ. Ĕçсыннисен пурнăçĕ çултан-çул лайăхланса пынă май, тавар çаврăнăшĕ ӳснĕçемĕн ӳссе пырать.

Вăрнарта пурăнакансем хушшинче ĕçпе чапа тухнă çынсем нумай. Вĕсем хушшинче Совет Союзĕн Геройĕ А. Иванов, РСФСР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕсем Г. Амвросьев, И. Никифоров, Ленин орденĕпе наградăланă учительсем Г. Кринецкий, Мордвинова, тракторист П. Тойдеряков тата ыттисем те.

Вăрнар поселокĕ ӳссе, аталанса пырать. Халĕ Вăрнарта çĕнĕ строительство сарăлать. МТС-ра электростанци, кирпĕчрен кантур çурчĕ тунă, рабочисен клубĕ тăваççĕ. Ĕçсыннисем çĕнĕ пӳртсем туса лартаççĕ. Часах Вăрнарта кирпĕчрен çĕнĕ вăтам шкул, обществăлла мунча, тума пуçлаççĕ.

«Коммунизм ялавĕ» хаçатăн коллективлă корреспонденчĕ — «Социализм çулĕ» хаçат редакцийĕ.

ӲКЕРЧĔКСЕМ ÇИНЧЕ: Вăрнар. Сылтăм енче—ачасен санаторийĕ. Сулахай енче — рабочисем хăйсене валли туса лартнă çуртсем.

А. КОСТИН фотоӳкерчĕкĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илер!

Шкул хатĕр

Эпир çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме хĕллех тытăнтăмăр. Ку ыйтăва педагогика советĕнче тата колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче сӳтсе явнă, мĕнле ĕçсем тума кирлине палăртнă.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленмелли план тунă чухне эпир иртнĕ çулхи опыта асра тытрăмăр. Ун чухне шкул дирекцийĕ ял Совечĕпе тачă çыхăнса ĕçлерĕ. Çавна май 1952—1953-мĕш вĕренӳ çулĕнче пур ачасене те вĕрентес тĕлĕшпе нумай ĕçсем туса ирттернĕ. Тăлăх ачасене 2,2 центнер тырă панă. Кунсăр пуçне 44 метр пусма тавар, 217 тенкĕлĕх учебниксемпе вĕренмелли хатĕрсем, 5 ачана фуфайка илсе панă. Апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вĕренӳ çулĕ вĕçлениччченех 33 ачана вĕри апат çитернĕ. Çакăн пек пулăшнипе пур ачасем те шкула йĕркеллĕ çӳрерĕç. Пĕлтĕрхи вĕренӳ çулĕнчи опыта шута илсе, çитес вĕренӳ çулĕнче те ачасене пулăшу пама палăртнă. Шкулăн пĕр гектар ытла вырса илмелли пур тата 0,12 гектар çине çĕрулми лартса хăварнă.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе шкул валли 40 кубометр вутă илнĕ, ăна турттарнă, татса çурса сарайне купаласа хунă. Типĕ вутăпа хутнипе шкул çурчĕ хĕлле йĕпенмест. Учительсене те çитес вĕренӳ çулĕнче хутма кашнине пилĕкшер кубометр вутă турттарса панă. 500 тенкĕлĕх наглядлăй пособисем илнĕ. Ачасем валли 1.000 тетрадь ытла илсе хатĕрленĕ. Кивĕ учебниксене ачасем пĕрпĕрне сутассине вĕренӳ çулĕ пĕтиччченех организациленĕ. Парттăсене пурне те тӳрлетсе тухнă, класс доскисене хура краскăпа сăрланă.

Ачасене пурне те августăн 1-мĕшĕ тĕлне шута илсе тухма тĕплĕн хатĕрленетпĕр. Пуринчен ытла ку ĕçре çитес вĕренӳ çулĕнче пĕррелĕш класа пуçласа пыракан ачасене тĕплĕн шута илес тĕлĕшпе учительсем халех ачасен ашшĕ-амăшĕсем патне çӳреççĕ, вĕсемпе калаçаççĕ. Ачасене шута илсе тухма пур учительсене те участоксем уйăрса панă, вĕсем хăйсен участокĕсене лайăх пĕлсе тăраççĕ.

Г. НИКИФОРОВ,
Вăрмар районĕнчи Анаткасри çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ.

Институтран вĕренсе тухрĕç

Канашри учительсем хатĕрлекен институт кăçалхипе виççĕмĕш выпуск турĕ. Çак вăхăтра 5—7-мĕш классенче ĕçлеме 772 учитель хатĕрленĕ. Кăçал 290 учитель вĕрентсе кăларнă. 128 студент отлично тата хорошо паллăсемпе вĕренсе тухнă, 11 студент чи лайăх вĕреннисен дипломне илме тивĕçлĕ пулнă. Çавăн пекех 58 çын институтран заочно вĕренсе тухрĕç.

ВЛКСМ Чăваш обкомĕ вĕренӳре уйрăммăнах лайăх ĕлкĕрсе пынă тата обществăлла ĕçе активлă хутшăннă 11 студента Хисеп грамоти парса наградăланă.

Çамрăк учительсем Хабаровск, Красноярск крайĕсене, Камчатка облаçне тата ытти инçетри вырăнсенчи шкулсенче ĕçлеме каяççĕ.

П. ЩИПЦОВ.

Çутĕç пайĕ заведующийĕсен канашлăвĕ

Кăçал нумай шкулсем вĕренӳ çулне ăнăçлă вĕçлерĕç. Экзаменсенче лайăх паллăсем илнисен йышĕ, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, пысăкрах пулчĕ. Çавăнпа пĕрлех чылай шкулсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пурри палăрчĕ.

Хальхи вăхăтра çутĕç органĕсем иртнĕ вĕренӳ çулĕн итогне тăваççĕ, çавăнпа пĕрлех çитес вĕренӳ çулне хатĕрленес енĕпе мĕнле ĕçсем тума кирлине шута илеççĕ, вĕренӳ пуçланиччен юлнă кĕске вăхăт хушшинче шкулсене пур енчен те лайăх хатĕрлесе çитерме мерăсем йышнаççĕ. Шăпах та çак ыйтусем çинчен сӳтсе яврĕç районти тата хулари çутĕç пайĕсен заведующийĕсем çак кунсенче Чăваш АССР Çутĕç министерствинче пулнă канашлура.

Канашлу участникĕсем çитес вĕренӳ çулĕнче шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçне çӳлĕрех пусăма çĕклесси çинчен каларĕç. Партин XIX-мĕш съездĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсем тăрăх пурне те вăтам пĕлӳ иличчен вĕрентессине пурнăçлас енĕпе пысăк утăм тумалла. Çитес вĕренӳ çулĕнчен пуçласа республика центрĕнче пур ачасене те вунă çул вĕрентессине ĕçе кĕртме тытăнмалла. Политехникăлла вĕренĕве кусас енĕпе те шкулсем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ.

Канашлура иртнĕ вĕренӳ çулĕн итогĕсем тата çитес вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен Çĕмĕрле районĕнчи çутĕç пайĕн заведующийĕ Яробейкин юлташпа Сĕнтĕрвăрри районĕнчи çутĕç пайĕн заведующийĕ Ефимов юлташ докладсем туса пачĕç.

Çĕмĕрле районĕнчи шкулсенче 27 учитель вĕрентекен ачасем пурте вĕренӳре ĕлкĕрсе пынă. Хулари иккĕмĕш вăтам шкулта Ижеева, Кудряшова, Кириллова учительницăсем, пĕррмĕш вăтам шкулта Борисовăпа Соловьев юлташсем, Хутарти вăтам шкулта Федоров учитель ачасене лайăх вĕрентеççĕ.

Çав вăхăтрах районти шкулсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Экзаменсен результачĕсем тăрăх, чылай ачасене уйрăм предметсемпе кĕркуннене экзамен пама хăварнă, пĕр класрах тепĕр çула хăварнисем те йышлă. Пысăк Улхашри вăтам шкулта вĕреннĕ ачасенчен 33,4 проценчĕ тепĕр класа куçайман. Районти уйрăм шкулсен директорĕсемпе вĕренӳ пайĕсен заведующийĕсем учительсен урокĕсене сахал çӳреççĕ, вĕсене хăйсен ĕçталăхне ӳстерме сахал пулăшаççĕ.

Районти халăха вĕрентес ĕç пайĕ вĕренӳ çулĕ пынă вăхăтра кашни шкулах икшер хут тĕрĕслеме тивĕçлĕ. Анчах Çĕмĕрле районĕнче ултă шкула çеç икшер хутчен, ыттисене пĕрер хут çеç тĕрĕсленĕ.

Çуллахи каникул пуçлансан районта пионер лагерĕ уçнă. Кĕркунне экзамен памалли ачасене вĕрентсе хатĕрлес енĕпе чылай учительсем ĕçлеме тытăннă.

Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче районти шкулсенче 7.680 ача вĕреннĕ пулсан, 1953—1954 вĕренӳ çулĕнче 8.033 ача вĕренмелле. Шкула çӳреме тивĕçлĕ ачасене малтанлăха шута илсе тухнă. Шкулсене юсама кирлĕ укçа-тенкĕне районти финанс пайĕпе ял Совечĕсем вăхăтра памаççĕ, çавна пула шкулсене юсас ĕç начар тăрать. Районти 12 шкул валли вутă пачах кӳрсе пыман.

Сĕнтĕрвăрри районĕнче çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕç анлă сарăлнă. Шкулсем валли çулталăка кирлĕ вутăн 80,8 процентне хатĕрленĕ. Кайри Чиперуйри пуçламăш шкулпа Сĕнтĕрвăрринчи çичĕ çул вĕренмелли шкула кăçал тĕпрен юсама палăртнă пулсан, вĕсене юсаса пĕтернĕ. Сĕнтĕрвăрринчи вăтам тата Кĕçĕн Астакассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулсене тĕпрен юсас ĕç ăнăçлă пырать. Çав вăхăтрах Турханкассинчи вăтам шкул çуртне юсама пачах тытăнман. Ку шкула тĕпрен юсамалла. Ăна юсамалли проекта Чăваш АССР проект кантурĕ туса памалла. Çак кантур асăннă проекта июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне çеç ярса пама пулать.

Учительсен квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе мĕнле ĕçсем туни çинчен Тимофеев юлташ (Учительсен пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен институт) каларĕ. Институт организацилекен курссенче вĕренме çутĕç пайĕсен учительсене вăхăтра уйăрса ямалла, терĕ вăл.

«Педагогика вулавĕсене» пур çĕрте те ирттермелле. Методика пĕрлешĕвĕсен руководителĕсем тата предметлăй комиссисен председателĕсем пулма пысăк квалификациллĕ учительсене уйăрмалла. Çитес вăхăтра «Литературная газета» хаçатра шкулсенчи вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ пирки *сӳтсе явас майпа пичетленнĕ статьясене* сӳтсе явма учительсен конференцийĕсене ирттермелле. Учительсен августри канашлăвĕсене пухса ирттерме халех хатĕрленмелле. Çав канашлусем малта пыракан учительсен опытне пропагандăламалли трибунăсем пулса тăмалла.

Канашлура тата çутĕç министерствин кадрсен пайĕн начальникĕ Абашев, Чăвашгосиздатăн учебниксем кăларас енĕпе ĕçлекен редакцийĕн заведующийĕ Яковлева, пуçламăшпе вăтам шкулсен работникĕсен профсоюз обкомĕн представителĕ Ильин, ачасен техника станцийĕн директорĕ Федотова, Чăваш АССР Çутĕç министрĕ Токарев юлташсем тата ытти те тухса каларĕç.

Пĕлĕве ӳстереççĕ

Патăрьелĕнчи И. Я. Яковлев ячĕпе тăракан педагогика училищинче Чкаловски, Шăмăршă, Елчĕк, Комсомольски тата Первомайски районĕсенчи пуçламăш шкулсенчи учительсен пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен курссенче занятисем вĕçленчĕç.

Пĕр уйăхлăх курсра çитмĕл учитель ытла вĕреннĕ. Вĕсем уйрăмах марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсемпе тĕплĕн паллашрĕç, тĕрлĕ предметсен методикине вĕренчĕç.

И. МАТРОСОВ.
И. ЛЯЛЬКИН.

Пĕр миллионлăх ытла

ВĂРНАР. Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхозăн обществăлла хуçалăхĕ çулленех ӳссе тĕрекленет, колхозниксен пурнăçĕ лайăхланать. Çакна Кольцовкăри ялпо тавар çаврăнăш планне тултарнинчен те аван курма пулать. Кăçалхи çур çул хушшинче ялпо колхозниксемпе ялти интеллигенцие пĕр миллион та 213 пин тенкĕлĕх тавар сутнă. Çапла вара çур çулхи плана ялпо 115 процент тултарнă. Майпа июнь уйăхĕсенче кăна колхозниксем никельпе витнĕ тимĕр кроватьсем 52, велосипедсем 24, пĕр мотоцикл, 6 патефон туяннă.

Колхоз членĕсем уйрăмах радиоприемниксем, сӳхе пуставсем тата тюль ыйтаççĕ.

Н. ЛЕОНИДОВ.

Улма-çырларан—пысăк тупăш

УЛАТĂР. «Путь Ильича» колхоз сачĕ 35 гектар çĕр йышăнать. Унта улмуççи, груша, крыжовник, хурлăхан тата ытти улма-çырла йывăççисем лартнă. Колхоз çулленех садпа улма-çырла питомникĕнчен 70—90 пин тенкĕ тупăш илет.

Çак кунсенче колхозниксем ир пиççе çитекен чие çырли пухма тытăнчĕç. «Луиза» ятлă çĕр çырли те пиççе çитнĕ. Чие çырлипе çĕр çырли сутса колхоз 8 пин тенкĕ тупăш илчĕ те ĕнтĕ.

Н. КАШОВ.

Саман кирпĕч тăваççĕ

ЧКАЛОВСКИ. Киров ячĕпе тăракан колхозра строительство ĕçĕнче вырăнти материалсемпе анлăн усă кураççĕ. Кунта саман кирпĕч тăвассине йĕркеленĕ. Иртнĕ çул саман кирпĕчрен автомашинăсем валли гараж, ялхуçалăх машинисем усрамалли сарай, бензохранилище, омшаник тунă. Кăçал саманран ĕне вити тата пăру вити тума палăртнă.

Саман кирпĕчĕ çапнă çĕрте уйрăм бригада ĕçлет. Бригада членĕсем 15 пин ытла кирпĕч çапнă.

Г. ПЛЕЧОВ.

17 çурт лартнă

МУРКАШ. Сталин ячĕпе тăракан колхозра обществăлла çурт-йĕр тăвас ĕç çине тимлĕ пăхаççĕ. Ку ĕçе тума ятарласа икĕ бригада уйăрнă. Бригада членĕсем иртнĕ çулта 17 тĕрлĕ çурт-йĕр туса лартнă. Вăл шутра лаша вити тăваттă, сысна вити иккĕ, пăру, чăх-чĕп витисем, кормокухня, омшаник, ферма работникĕсем валли пурăнмалли çурт тунă.

Жданов ячĕпе тăракан колхозри строительство бригади кăçал 1.500 чăх-чĕп вырнаçмалăх стандартлă çĕнĕ вите туса пĕтерчĕ.

П. ЯКОВЛЕВ.

Пулă ĕрчетеççĕ

СОВЕТСКИ. Кăçал районти кашни колхозра çĕнĕ пĕвесем тунă, киввисене юсанă. Пĕвесенче пулă ĕрчетеççĕ, унти шывпа пахча çимĕç шăварнă çĕрте усă кураççĕ.

Çак кунсенче Киров ячĕпе тăракан колхоз ял хушшине пысăк пĕве туса пĕтерчĕ. Унта шыв тулăх. Пулă ĕрчетмелли пĕвесене юсанă.

Пĕвесем тăвас тĕлĕшпе кăçал «За коммунизм», «Восход», Хрущев ячĕпе, Калинин ячĕпе тăракан, «Дружба» колхозсем те нумай ĕçленĕ.

Я. СИГАЕВ.

СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче

Пичетре кăçалхи июлĕн 15-мĕшĕнче Нью-Йоркра СССР-ти тата США-ри шахматистсен командисем хушшинче матч пулмалла, тесе пĕлтернĕччĕ. Çавна май июлĕн 8-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ А. Я. Вышинский США-н ССР Союзĕнчи вăхăтлăх поверенныйне О'шонесси господина çакăн пек заявлени тунă:

«Кăçалхи июлĕн 15-мĕшĕнче Нью-Йоркра СССР-ти тата США-ри шахматистсен командисем хушшинче матч пулмалла тунă май Сире çакăн çинчен пĕлтерме кирлĕ тесе шутлатăп.

Кăçалхи февралĕн вĕçĕнче Пĕтĕм тĕнчери шахмат федерацийĕн президенчĕ Рогард господин, Америкăри шахмат федерацийĕ ячĕпе, ССР Союзĕнчи Пĕтĕм Союзри шахмат секцине чĕнӳ янă—кăçалхи июльте Нью-Йоркра СССР-ти тата США-ри шахматистсен командисем хушшинче матч ирттерме чĕннĕ.

Пĕтĕм Союзри шахмат секцийĕ Америка федерацийĕ чĕнни çине ответлесе, Америкăри шахматистсен командипе матч ирттерме килĕшнĕ, ун хыççăн Америкăри шахмат федерацийĕпе Совет Союзĕнчи шахмат секцийĕ матч ирттермелли мĕнпур условисем пирки калаçса килĕшнĕ.

Анчах совет шахматисчĕсене США-на кĕме виза панă чухне Америка Посольстви, США госдепартаменчĕ кăтартса панипе, çапла пĕлтернĕ: совет шахматисчĕсем Нью-Йорк хулинче пурăнсан, Нью-Йорк хулинчен нисçта та тухмасан çеç вĕсене виза паратпăр, тенĕ.

Ку ыйту тăрăх СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви США-н Мускаври Посольствипе калаçусем ирттернĕ чухне çакă паллă пулнă: совет шахматисчĕсене Нью-Йорк хулинчен тухма чарни вĕсене Гленков хулине те кайма чарни пулать, Гленков хули Нью-Йорк хулинчен 12 километрта вырнаçнă, унта ССР Союзĕн ООН çумĕнчи Представительствин дачи пур, матч вăхăтĕнче лайăх канмалла пултăр тесе совет шахматисчĕсене çав дачăра вырнаçтармалла тунă.

Июлĕн 7-мĕшĕнче, совет шахматисчĕсем ССР Союзĕнчен США-на кайма çул çине тухнă хыççăн, Министерство Посольствăран Госдепартамент совет шахматисчĕсене Нью-Йорк хулинчен тухса Совет представительствин Гленков хулинчи дачине çӳреме ирĕк паман тесе пĕлтернине илнĕ.

Совет шахматисчĕсене Гленков хулине кайса çӳреме чарни вĕсемшĕн США-ра пулса шахмат матчне хутшăнма юрăхсăр условисем туса хурать, çавăн пек туни США-на пыма чĕннĕ совет шахматисчĕсем тĕлĕшпе тĕнчери çĕршывсенчи хăнасем йышăнмалли йĕркепе килĕшсе тăмасть, кун пек условисене совет шахматисчĕсем пачах йышăнма пултараймаççĕ.

Пĕтĕм Союзри шахмат секцийĕ тата совет шахматисчĕсем çапла шутлаççĕ: маларах кăтартнă условисене улăштармасан, вĕсем США-на пыма тата шахмат матчне хутшăнма пултараймаççĕ».

В. В. Маяковский ятне асăнса

КИЕВ, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Украинăри хуласемпе ялсенче В. В. Маяковский пултарулăхĕ çинчен лекцисемпе калаçусем ирттереççĕ, выставкăсем организацилеççĕ.

Поэт çуралнăранпа 60 çул тултарнă ятпа Киевра июлĕн 7-мĕшĕнче Украина ССР Наукăсен академийĕн обществăлла наукăсен уйрăмĕн институчĕсенче наукăлла сесси пулса иртнĕ. Сесси ĕçне ученăйсем, писательсем, литература работникĕсем, Украинăри Т. Г. Шевченко ячĕпе тăракан литература институчĕн научнăй работникĕсем хутшăннă.

Сессире «Маяковский сатири», «Маяковский поэзийĕ Аслă Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче», «Маяковский лексикин уйрăмлăхĕ» çинчен докладсем итленĕ.

СИМФЕРОПОЛЬ, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). В. В. Маяковский Крымра часчасах пулнă. Вăл Ялтăра пулнă чухне «Лайăх!» ятлă поэмăн юлашки сыпăкĕсене, «Нетте юлташа—пăрахутпа этеме» ятлă сăвă çырнă. Вăл Крым çинчен çырнă сăвăсем нумай. Маяковский облаçри ĕçсыннисемпе курорта пынă çынсем хушшинче лекцисем ирттернĕ, хăйĕн сăввисене вуласа панă.

Маяковский çуралнăранпа 60 çул тултарнă ятпа облаçри библиотекăсем поэт пурнăçĕпе пултарулăхне кăтартакан выставкăсем организацилеççĕ. Алуштари краеведени музейĕ пысăк выставка организациленĕ. Выставка Маяковский Крымра пулнă чухнехи ĕçсене кăтартса парать. Кунта Крыма белогвардеецсемпе ют çĕршыв интервенчĕсенчен тасатассишĕн кĕрешнĕ тапхăрта РОСТА кăларнă плакатсем, поэт Крымри клубсемпе санаторисенче туса каласси çинчен пĕлтернĕ афишăсем тата ыттисем те пур.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

Йĕпреç районĕнчи Упакассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта ĕçлекен Кузнецов учителе «Трудовик» колхозри коммунистсемпе комсомолецсене политикăна вĕрентес ĕçе—политкружока ертсе пыма шаннă. Анчах Кузнецов юлташ занятисене йĕркеллĕ ирттерсе пыман. Çавăн пекех вăл шкулта вĕрентӳпе воспитани ĕçне çителĕксĕр туса пынă. Çакăн çинчен «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине çыру килнĕччĕ. Редакци çырăва КПСС Йĕпреç райкомне асăннă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма янăччĕ.

Парти райкомĕ çырура фактсене тĕрĕс кăтартса пани çинчен пĕлтерчĕ. Парти райкомĕ çитес вĕренӳ çулĕнче Кузнецова Упакасси шкулĕнчи вĕренӳ пайĕн заведующийĕн ĕçне шанса пама май çуккине палăртнă.

Парти решенийĕсене пурнăçлассишĕн активлă кĕрешмелле

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕ лартнă пысăк задачăсем пĕтĕм совет халăхне ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тултарма хавхалантараççĕ. Кашни пуçламăш парторганизаципе кашни коммунист тивĕçĕ вăл съезд лартнă задачăсене пурнăçлассишĕн кĕрешме ĕçсыннисене активлă кĕрешме мобилизацилесси пулать.

Производство планĕсене тултарни парти решенийĕсене пурнăçлани пулать, мĕншĕн тесен кашни заданирех парти политики палăрса тăрать. Çакна асра тытса, КПСС Канаш хула комитечĕ предприятисем производство планĕсене мĕнле пурнăçланине тăтăшах асăрхаса тăрать, коммунистсем ĕçре яланах малта пыччăр, тесе тăрăшать.

Çак çулăн пуçламăшĕнче хулари предприятисем çителĕксĕр ĕçлерĕç, парти органĕсем йышăннă решенисем пурнăçланса пымарĕç. КПСС хула комитечĕн практикăлла мерăсем йышăнмалла пулчĕ, уйрăмах кая юлса пыракан предприятисем çине тимлĕрех пăхма тиврĕ. Социализмла ăмăртăва ертсе пырас ĕçе лайăхлатасси çинчен пуçламăш парторганизаци секретарĕсен, предприяти руководителĕсен тата профсоюзсен вырăнти комитет председателĕсен канашлăвĕсенче сӳтсе явнă. Хăшпĕр предприятисен руководителĕсене хула комитетне чĕнсе илнĕ, вĕсемпе пĕрле производство планĕсем пурнăçланманнин сăлтавĕсене тĕплĕн тишкерсе тухнă, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе практикăлла мерăсем палăртнă. Çак ыйтусене хула комитечĕн бюро ларăвĕсенче тата пуçламăш парторганизацисенчи пухусенче те сӳтсе явнă.

Çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнни лайăх результатсем пачĕ: хулари предприятисем производство планне март уйăхĕнче 104 процент, апрель уйăхĕнче 107,3 процент, май уйăхĕнче 108,7 процент, 5 уйăх хушшинчи плана 101,8 процент тултарчĕç.

Решени йышăннă хыççăн ĕç ăнăçлăхĕ организацилле ĕçсенчен килет. Решенисене пурнăçлас ĕçе коммунистсем кăна мар, партире тăман рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем те хутшăнаççĕ. Çавăнпа та решенисен пĕлтерĕшĕ çинчен тата вĕсене вăхăтра пурнăçлама кирли çинчен ăнлантарса парасси, решенисене пурнăçлассишĕн кашни коммунист активлă кĕрештĕр тесе тăрăшасси парторганизацисен задачи пулать. Коммунист, вăл кирек мĕнле участокра пулсассăн та, ĕçре кăтартуллă пулма, партире тăманнисене ертсе пыма тата парти решенийĕсене пурнăçлассишĕн активлă кĕрешме тивĕç. Коммунистсем ĕçре малта пыни çинчен калакан тĕслĕхсем партин Канаш хулинчи организацийĕнче нумай.

Акă хăшпĕр тĕслĕхсем. Канаш станцийĕн деповĕнче топливо ытлашши расходланă пулнă. Партин XIX-мĕш съездĕ чĕртаварсемпе материалсене, электроэнергипе тата топливо перекетлеме кирли çинчен кăтартса панине депора пурнăçласа пыман. Партин XIX-мĕш съездĕн решенийĕсене пурнăçлассишĕн тăрăшса, старши машинист—СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ коммунист П. Н. Назаров юлташ топливо перекетлес тĕлĕшпе хăй пухнă опыт çинчен ыттисене каласа панă. Вăл депори машинистсене пурне те топливо перекетлессишĕн кĕрешме чĕннĕ. Пăравус деповĕнчи партбюро Назаров юлташăн паха пуçарăвне вăхăтра асăрхаса илнĕ. Топливо перекетлесси çинчен партбюро ларăвĕнче ятарласа сӳтсе явнă тата ку ыйтупа конкретлă ĕçсем ирттерме палăртнă. Пăравуссене техника тĕлĕшпе тĕрĕслесе тухнă, старши машинист Назаров юлташ тунă çитĕнӳсене хаçатсенче анлăн сутатнă тата вĕсем çинчен рабочисене пухусенче каласа ăнлантарнă. Март уйăхĕнче техникăлла конференци ирттернĕ, унта инженерсемпе техниксем Назаров юлташăн опытне тĕплĕн пĕтĕçтернĕ, депори машинистсем харпăр хăйĕн ĕç опычĕсем çинчен калаçа панă. Çапла тунипе депо коллективĕ топливо перекетлес енĕпе малтанхи утăмсем турĕ. Апрель уйăхĕнче, сăмахран, 230 тонна топливо перекетленĕ.

Вагонсем юсакан заводри нумай коммунистсем производствăра лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ, çапла майпа партипе правительство директивисене пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ. Акă, Пекшинпа Рябов газорезчиксем, Блохин токарь 1952 çулта икшер çулталăк нормине тултарчĕç. Вĕсем кăçал та иртнĕ çулхи хăвăртлăхсене чакармасăр ĕçлеççĕ. Коммунистсем хăйсен хастарлă ĕçĕпе партире тăманнисене хавхалантарса пыраççĕ. Пĕлтĕр заводри тăватçĕре яхăн рабочи 1,6 çулталăк нормине тултарнă.

«Дружба» артельте коммунист Мартьяшин юлташ ертсе пыракан бригада производство планне пĕрмаях 200 процент тултарать, вăл туса кăларакан продукци пахалăхĕ пысăк. «Дружба» артель коллективĕ производство планне кварталтан квартала, уйăхран уйăха тултарса пырать. 1952 çулхи плана 165,7 процен тултарнă, планран ирттерсе 3.450 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Кăçалхи 5 уйăх хушшинче çулталăкри производство планне 137,2 процент тултарнă.

Партипе правительство плана хисеп енĕпе кăна мар, пахалăхпа ассортимент енĕпе те тултарма хушаççĕ. Партин XIX-мĕш съездĕн решенийĕсене вĕреннĕ хыççăн парторганизаци çак пысăк ĕç çине уйрăмах тимлĕн пăхма тытăнчĕ. Çак ыйтăва парти пухăвĕнче тата рабочисемпе служащисен пухăвĕнче сӳтсе явнă. Артель коллективĕ производство планне пур енĕпе тултарма конкретлă обязательствăсем илнĕ. Парторганизаци коллектива илнĕ обязательствăсене пурнăçлама мобилизацилесе пычĕ. Çавна пула артель 5 уйăх хушшинче пĕтĕмĕшле продукци туса кăлармалли плана 137,2 процент тултарчĕ пулсан, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, продукцин хăйне ларакан хакне 3,5 процент йӳнетре, ĕç тухăçлăхне 2 процент ӳстерчĕ, накоплени тумалли плана 112 процент тултарчĕ. Артель коллективĕ продукцие палăртнă ассортимент чухлĕ туса кăларассишĕн хастарлăн кĕрешет, ку задачăна ăнăçлăн пурнăçласа пырать.

Çапах та, калас пулать, хăшпĕр пуçламăш парторганизацисем парти директивисене пурнăçлассишĕн тивĕçлипе кĕрешмеççĕ-ха. Уйрăмах решенисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесси çителĕксĕр пулса пынине палăртас пулать. Çавна шута илсе, КПСС хула комитечĕ парти организацийĕсем хăйсен решенийĕсене тата партин аслăрах органĕсен решенийĕсене мĕнле пурнăçлани çинчен пленумра сӳтсе явма йышăнчĕ. Çак ыйтусемпе пăравус деповĕнчи партбюро секретарĕн Бараматов юлташăн тата строительствăпа монтаж кантурĕнчи партбюро секретарĕн Иванов юлташăн доклачĕсене итлесе сӳтсе явнă.

Пленум çак парторганизацисен тата ыттисен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине кăтартса пачĕ. Çавăнпа пĕрлех пленумра партин хула комитечĕн ĕçĕнче те пысăк çитменлĕхсем пулни палăрчĕ. Хула комитечĕн членĕсемпе пуçламăш парторганизацисен секретарĕсем решенисене конкретлăн йышăнма кирли çинчен, çапла тусан кăна решенисене ăнăçлă пурнăçлама май пурри çинчен манса кайнă. Решение тĕплĕн шухăшласа йышăннă пулсан, ĕçсене хăш вăхăтра тата камăн тумаллине палăртса хурсан, паллах ĕнтĕ, вĕсене пурнăçлама коммунистсемпе партире тăманнисене мобилизацилеме те лайăхрах. Çапах та ку енĕпе хулари парторганизацире чылай çитменлĕхсем пулнă.

Çапла, сăмахран, «Красный воин» артельти пуçламăш парторганизацин пухăвĕнче хула комитечĕн IV-мĕш пленумĕн решенине сӳтсе явнă. Пленумра пысăк ыйту тăнă: кадрсене суйласа илсе воспитани парасси çинчен сӳтсе явнă. Анчах ку ыйту тăрăх пленум йышăннă решение сӳтсе явасси çине пуçламăш парторганизацире сиелтен пăхнă. Пуху йышăннă решени конкретлă пулман, вăл никама та «пырса тĕкĕнмен».

Çакă вăл ыйтăва сӳтсе явма кирлĕ пек хатĕрленменнинчен, артельти ĕçсене тĕплĕн тишкерменнинчен килнĕ. Пухура коммунистсем критикленине те шута илмен. Коммунистсем артель руководителĕсен çитменлĕхĕсем çинчен каланă. Çав çитменлĕхсем çинчен партбюро секретарĕ Айдарова юлташ пĕлет, анчах мерăсем йышăнмасть, тесе палăртнă коммунистсем. Артельте кадрсемпе мĕнле ĕçленине пухун тĕплĕн тишкермелле пулнă, хурăнташлăх пулса тăнине палăртмалла пулнă. Çав çитменлĕхсене пула артельте пурлăха саратнă тĕслĕхсем пулни çинчен каламасăр иртсе кайма килмен ĕнтĕ.

Канашторгри парторганизацире пĕр пухура кадрсем çинчен сӳтсе явнă. Ку ыйтăва тĕплĕн сӳтсе явас вырăнне, пĕтĕм çитменлĕхсемшĕн айăпа кадрсем енĕпе ĕçлекен инспектор Албутова юлташ çине йăвантарнă.

Кадрсене суйласа илсе воспитани парас ĕçри çитменлĕхсене пухура кăтартса паман. Çав вăхăтрах Канашторгра ку ĕçре пысăк çитменлĕхсем пулнă. Пуçламăш парторганизаци секретарьне Николаев юлташа тата Канашторг управляющине Дюкин юлташа кадрсемпе ĕçлес тĕлĕшпе йăнăшсем тунăшăн критиклемен, *çитменлĕхсене пĕтерме мерăсем* палăртман.

Ку пуçламăш парторганизацирех тепĕр пухура пĕр пысăк ыйту—комсомол организацине ертсе пырасси çинчен сӳтсе явнă. Пуху çамрăксем валли тăтăшах лекцисемпе докладсем ирттерме, комсомол организацине лайăхрах пулăшма, унăн секретарĕн доклачĕсене вăхăтран вăхăта парти пухăвĕнче сӳтсе явма палăртнă. Решени йышăннă та лăпланса ларнă, ăна пурнăçлас тĕлĕшпе нимĕн те туман. Пуху пулнăранпа виçĕ уйăх иртрĕ ĕнтĕ, вăл йышăннă решени халĕ те хут çинче кăна шутланса тăрать.

Партин XIX-мĕш съездĕ йышăннă Устав коммунистсене парти решенийĕсене пурнăçлассишĕн активлă кĕрешме хушать. Анчах парти решенийĕсем çине сиелтен пăхакан, вĕсене пурнăçлассишĕн ответлăха туллин туйман коммунистсем те тĕл пулаççĕ. Сăмахран, гортоп директорĕ Чернов юлташ, ăна темиçе хутчен асăрхаттарнă пулин те, хăйне валли тивĕçлĕ выводсем туман, коллектива партипе правительство решенийĕсене пурнăçлама мобилизацилемен. Гортоп чи кирлĕ ĕçсем енĕпе плана тултармасть, çăмăлтарах ĕçсем енĕпе вара плана темиçе хут ирттерсе тултарнă. Çакăн йышши руководительсем парти решенийĕсене пурнăçлассишĕн активлă боецсем пулса тăрайман-ха, çавăнпа та вĕсем государство ĕçне сиен кӳреççĕ кăна.

КПСС хула комитечĕн ĕçĕнче те çитменлĕхсем пулнă. Вăл хăйĕн решенийĕсене мĕнле пурнăçланине çителĕксĕр тĕрĕсленĕ, пуçламăш парторганизаци секретарĕсене кирлĕ пулăшу паман.

Юлашки вăхăтра хула комитечĕ партилле ĕç опытне пĕтĕçтерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнчĕ.

Парти кашни коммуниста парти решенийĕсене пурнăçлассишĕн активлă кĕрешме хушать. Çакă вăл парти комитечĕсемпе пуçламăш парторганизацисем çине те пысăк ответлăх хурать. Парти руководителĕн, кирлĕ пулсан, кашни организацине кашни коммунист патне çитме вăхăт тупмалла, кадрсене воспитани парас тĕлĕшпе чăтăмлăн ĕçлемелле. Халĕ часчасах çапла та пулать: хула комитечĕн работникĕсем пуринчен ытларах çитменлĕхсем çинчен фактсем пухма тăрăшаççĕ, çав çитменлĕхсен сăлтавĕсене тишкермеççĕ. Решенисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕсленĕ чухне çитменлĕхсене пĕтермелли майсем çинчен кăтартса пани пысăк вырăн йышăнать. Тĕл пулакан çитменлĕхсене сиййĕнчех пĕтерме тăрăшмалла.

Парти решенийĕсене партире тăманнисене ĕçе хутшăнтармасăр пурнăçлама çук. Çапах та хула комитечĕ предприятисенче рабочисен пухăвĕсене йĕркеллĕ ирттермелле тăвайман-ха. Пухусенче рабочисем творчествăлла пуçарулăх кăтартма, çитменлĕхсене хăюллăн критиклеме пултараççĕ. Çакна малашне шута илмелле пулать.

Хула комитечĕ, çак çитменлĕхсене шута илсе, вĕсене пĕтерме мерăсем йышăнать. Коммунистсен ответлăхне ӳстерни парторганизацисен кĕрешӳ пултарулăхне вăйлатма пулăшать.

И. НОВИКОВ,
КПСС Канаш хула комитечĕн секретарĕ.

Ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑ туса пырассишӗн

Пирӗн республикӑри колхозниксемпе МТС механизаторӗсем тата ялхуҫалӑх специалисчӗсем 1953 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсен планне ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлассишӗн тӑванла Мари тата Мордва республикисемпе пыракан социализмла ӑмӑртура малти вырӑна тухассишӗн кӗрешеҫҫӗ. Республика кӑҫал ҫуракине пӗлтӗрхинчен лайӑхрах ирттерчӗ, суртри акмалли государство планне ирттерсе тултарчӗ. МТС-сем пулӑшнипе колхозсем агротехникӑлла ӗҫсене анлӑрах пурнӑҫласа пыма тытӑнчӗҫ.

КПСС Чӑваш обкомӗн V-мӗш пленумӗ калчасене пӑхса ӳстерес, тырпул пухса кӗртме тата ялхуҫалӑх продукчӗсене государствӑна пама хатӗрленес тӗлӗшпе парти, совет тата ялхуҫалӑх органӗсем умӗнче тӑракан задачӑсене тӗплӗн кӑтартса пачӗ. Пленум решенийӗсене пурнӑҫласа, республикӑри колхоз ӗҫченӗсем вӑйлӑ тырпул ҫитӗнтерме пӗтӗм вӑйхӑватпа пултарулӑха параҫҫӗ.

Апла пулин те ялхуҫалӑх органӗсен ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур-ха. Техникӑлла культурӑсемпе пахча ҫимӗҫсене, ҫӗрулмипе тымарҫимӗҫсене пӑхса ӳстерессине уйрӑмах япӑх йӗркеленӗ. Йӗтӗн акнӑ лаптӑкри ҫумкурӑксене ҫумламалли плана республикӑра ҫуррине те тултарман, пахча ҫимӗҫсене пӗррӗмӗш хут ҫумкурӑксенчен тасатмалли плана 57,4 процент кӑна тултарнӑ, июнӗн 10-мӗшӗччен кӑларса лартнӑ махорка калчисен ретне 26,9 процент ҫеҫ кӑпкалатса тухнӑ т. ыт. те. Ку ӗҫсене пурнӑҫлас тӗлӗшпе Хӗрлӗ Чутай, Кувакино, Улатӑр, Калинино, Ҫӗмӗрле, Куславкка тата Сӗнтӗрвӑрри районӗсенчи колхозсем питӗ юлса пыраҫҫӗ.

Колхозсемпе МТС-сем ялхуҫалӑх ӗҫӗсен тата та ответлӑрах тапхӑрне кӗчӗҫ. Тырӑ вырма тухиччен утӑ ҫулса пӗтермелле, государствӑна утӑ парса татмалла, силос хывмалли плана 80 процентран кая мар тултармалла. Ҫав вӑхӑтрах ҫак ӗҫсене те манма юрамасть: таса ҫӗртме пуссисене культиваци туса пӗтерес пулать, малтан кӑларман пулсан, ҫӗртме пуссисене тислӗк кӑлармалла; кашни колхозпа МТС-ӑн ҫывӑх вӑхӑтрах тырпул пухса кӗртме хатӗрленсе ҫитмелле; техникӑлла культурӑсене, пахча ҫимӗҫсене, тымарҫимӗҫпе ҫӗрулмие пӑхса ҫитӗнтерессине те пӗр вӑхӑтлӑха та вӑйсӑрлатмалла мар.

Малта пыракан колхозсен опычӗ ҫакна уҫӑмлӑн ҫирӗплетсе парать: калчасене вӑхӑтра тата тӗплӗн пӑхса ҫитӗнтерсен ҫеҫ вӑйлӑ тырпул туса илме пулать. Ку тӗлӗшпе вӑрлӑхлӑх хӑварнӑ нумай ҫул ӳсекен курӑк тата тӗштырӑсемпе ытти культурӑсен вӑрлӑх участокӗсем ҫине уйрӑмах тимлӗн пӑхмалла. Паха вӑрлӑх туса илиничен малашнехи тырпул тухӑҫлӑхӗн ӑнӑҫлӑхӗ килет. Вӑрлӑх участокӗсене хакламаннине татӑклӑнах пӗтермелле.

Вӑйлӑ тырпул туса илес енӗпе ялхуҫалӑхӗ умӗнче тӑракан задачӑсене татса пама халӗ ялхуҫалӑх органӗсемпе МТС тата колхоз руководителӗсен пӗтӗм тимлӗхпе ӗҫлемелле, колхозниксемпе механизаторсене ӗҫе тӗрӗс вырнаҫтарса тухмалла, вӗсен хастарлӑхне куллен-кун ӳстерсе пымалла.

Кӑҫал выльӑх-чӗрлӗх пӑхас ӗҫре малта пыракансен республикӑри канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлура пулнисем социализмла ӑмӑртӑва хутшӑнса конкретлӑ обязательствӑсем йышӑнчӗҫ.

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе парти обкомӗ выльӑх-чӗрлӗх пӑхас тӗлӗшпе малта пыракансен пуҫарӑвне ырларӗҫ, професисем енӗпе социализмла ӑмӑрту организацилеме постановлени йышӑнчӗҫ, ӑмӑртура мала тухакансене «Республикӑри чи лайӑх доярка», «Республикӑри чи лайӑх телятница», «Республикӑри чи лайӑх свинарка», «Республикӑри чи лайӑх птичница», «Республикӑри чи лайӑх овцевод» тата «Республикӑри чи лайӑх конюх» ячӗсене памалла турӗҫ.

Малта пыракансем обязательствӑсене чыслӑн пурнӑҫлаҫҫӗ. Кӑҫалхи 5 уйӑх хушшинче Чӑваш государство селекци станцийӗнчи доярка О. М. Митрофанова юлташ хӑйне ҫирӗплетсе панӑ кашни ӗнерен вӑтам шутпа 2.780 литр, Етӗрне районӗнчи Буденный ячӗпе тӑракан колхозри доярка А. С. Селиванова юлташ кашни ӗнерен 1.598 литр сӗт суса илме пултарнӑ.

Сӗт тухӑҫлӑхне ӳстерес енӗпе кӑҫал Ҫӗрпӳ районӗнчи Хрущев ячӗпе тӑракан колхоз та ӑнӑҫлӑ ӗҫлет. Ӗнесене вырӑнтан вырӑна куҫармасӑр пӑхассине йӗркелесе тата вӗсене ҫителӗклӗ таран симӗс курӑк ҫулса ҫитерсе, колхоз 1953 ҫулхи 6 уйӑх хушшинче вӑтам шутпа кашни ӗнерен 1.107 килограмм сӗт суса илнӗ, пӗлтӗр вара ҫав вӑхӑтра 738,5-шер килограмм суса илнӗ пулнӑ.

Малта пыракан колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес, ӑна пысӑк тупӑшпа паракан отрасль туса хурас ӗҫ ҫине мӗнпур тимлӗхпе пӑхаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре ҫитменлӗхсем те сахал мар-ха. Ҫак ҫулӑн пуҫламӑшӗпе танлаштарсан, июнӗн 1-мӗшӗ тӗлне выльӑх-чӗрлӗх шучӗ ӳснӗ пулин те, чылай районсенче ӗне выльӑх тата сыснасен шучӗ чакнӑ. Ӗне выльӑх Улатӑрпа Тӑвай районӗсенче, сыснасем Улатӑр, Куславкка, Хӗрлӗ Чутай, Первомайски, Пӑрачкав, Сӗнтӗр, Чкаловски, Шӑмӑршӑ тата Ҫӗмӗрле районӗсенче, Куславкка, Октябрьски, Йӗпреҫ, Тӑвай районӗсенче сурӑхсен шучӗ 5 процент е унтан та ытларах чакнӑ.

Республикӑри нумай районсенче выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхӗ пӗчӗккӗ. Кӑҫалхи 5 уйӑх хушшинче кашни ӗнерен, пӗлтӗрхи ҫав вӑхӑтпа танлаштарсан, сӗт ытларах суса илнӗ. Ҫав вӑхӑтрах Улатӑр, Канаш, Кувакино, Сӗнтӗрвӑрри, Пӑрачкав, Вӑрмар тата Чурачӑк районӗсенче сӗт тухӑҫлӑхӗ иртнӗ ҫулхинчен те пӗчӗкрех.

Чурачӑк районӗнчи колхозсенче ӗнесенчен сӗт уйрӑмах сахал суса илеҫҫӗ. Кӑҫалхи пилӗк уйӑхра кунта кашни ӗне 133 литр кӑна сӗт панӑ. Апла пулин те районта ӗнесене симӗс курӑк ҫулса парас ӗҫе организацилемен, выльӑх валли акнӑ ыраш калчипе те усӑ курман.

Ялхуҫалӑх органӗсен ответлӑ тивӗҫӗ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тата унӑн тухӑҫлӑхне ӳстерес ӗҫри ҫитменлӗхсене хӑвӑртрах пӗтерессипулать. Сӗт тухӑҫлӑхне ӳстерме халӗ ӗнесене курӑк ытларах ҫулса памалла.

Ялхуҫалӑх органӗсемпе колхоз руководителӗсен государствӑна выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем парассине хӑвӑртлатса пымалла, ку тӗлӗшпе обязательствӑсене ноябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне пурнӑҫлассишӗн кӗрешмелле.

Паллӑ ӗнтӗ, карта-витесем ҫителӗклӗ пулмасан, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе ӑнӑҫлӑ туса пыма ҫук. Малта пыракан колхозсем ҫак чӑнлӑха яланах асра тытаҫҫӗ. Шӑхасан районӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхозра (председателӗ В. П. Павлов юлташ) ҫулсеренех типовой витесем лартаҫҫӗ. Кӑҫал кунти строительство бригади 40 сысна вырнаҫмалӑх шлакпа бетонран ҫӗнӗ вите тӑвать, халиччен тунӑ витесене юсаса ӑшӑтать. Силос сооруженийӗсем тума колхозра шлакоблоксем хатӗрлеҫҫӗ.

Ҫӗмӗрле районӗнчи «Комбинат» колхоз (председателӗ И. Г. Моисеев юлташ) строительство ӗҫӗсене кӑҫал ҫуркуннех пуҫарса янӑ. Колхоз вырӑнти йӳне ларакан строй материалпа усӑ курать. Кунта кайӑк-кӗшӗк валли саман вите лартаҫҫӗ, шлакпа бетонран кормокухня тӑваҫҫӗ.

Анчах ҫакна каламасӑр иртсе кайма ҫук: витесем тума, киввисене юсама тытӑнман колхозсем республикӑра сахал мар-ха. Республикипе илес пулсан, лаша витисем тумалли плана 6,4 процент, ӗне витисем—2 процент, пӑру витисем—5,2 процент, сысна витисем—2,4 процент, кайӑк-кӗшӗк витисем—5 процент кӑна тултарнӑ, ытти ҫурт-йӗрсем лартас тӗлӗшпе те ӗҫсем чаплах мар. Уйрӑмах Элӗк, Сӗнтӗрвӑрри, Советски районӗсенчи колхозсем юлса пыраҫҫӗ. Ҫак районсенче кӑҫал ҫӗнӗрен пӗр вите те туман, киввисене те юсама тытӑнман.

Районсенчи ялхуҫалӑхӗпе хатӗрлев управленийӗсен, колхоз руководителӗсен строительство ӗҫӗсене вӑйлатма халех мерӑсем йышӑнмалла. Строительство бригадисене ҫирӗплетмелле, ҫук пулсан, вӗсене пӗр тӑхтаса тӑмасӑр организацилемелле. Строительствӑри колхозниксене урӑх ӗҫсене ямалла мар. Ҫапла вара, хӗлле валли кашни колхоз ӑшӑ та ҫутӑ витесем ҫителӗклӗ хатӗрлесе ҫитерме пултартӑр.

Тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерес тата обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫсенче машина-трактор станцисем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Кӑҫал республикӑри МТС-сен, пӗлтӗрхипе танлаштарсан, 400 пин гектар сухаланӑ чухлӗ ытларах ӗҫ тумалла, 70 тӗрлӗ ялхуҫалӑх ӗҫӗсене механизацилемелле. Ҫак задачӑсене пурнӑҫлас тесе тракторсемпе, комбайнсемпе тата ытти механизмсемпе пуринпе те тухӑҫлӑ ӗҫлемелле.

Анчах та республикӑри нумай МТС-сем хӑйсен ӗҫне тивӗҫлипе туса пыраймаҫҫӗ-ха, вӗсем партин XIX-мӗш съезчӗ ялхуҫалӑхӗ умне лартнӑ тӗп задачӑна пурнӑҫлама колхозсене ҫителӗксӗр пулӑшаҫҫӗ. Ку ӗнтӗ, чи малтан, техникӑпа япӑх усӑ курнинчен килет.

Чылай тракторсемпе ытти машинӑсем ӗҫсӗр тӑраҫҫӗ. Тракторпа тӑвакан талӑкри ӗҫ калӑпӑшӗ пӗчӗккӗ. Сӑмахран, Етӗрне, Сӗнтӗрвӑрри, Сиява, Ҫӗмӗрле машина-трактор станцисенче вӑтам шутпа 15 лаша вӑйлӗ кашни трактор пуҫне талӑкра 3—3,5 гектар сухаланӑ чухлӗ кӑна ӗҫ тӑваҫҫӗ. Элӗк, Калинино, Кувакино, Куславкка тата ытти хӑшпӗр машина-трактор станцисем колхозсене сарлака ретпе акнӑ культурӑсен речӗсене кӑпкалатма, утӑ ҫулма тата силос хывма ҫителӗксӗр пулӑшаҫҫӗ. Республикипе илес пулсан, МТС-сем июлӗн 5-мӗшӗ тӗлне утӑ ҫулмалли плана 10,9 процент, силос хывмалли плана 1,7 процент ҫеҫ тултарнӑ. Хӑшпӗр МТС-сем, сӑмахран, Чкаловски, Елчӗк машина-трактор станцисем силосорезкӑсене халӗ те юсаман, ку ӗнтӗ выльӑхсем валли сӗтеклӗ апат хатӗрлеме хытӑ чӑрмантарать.

МТС руководителӗсен утӑ ҫулмалли, силос хывмалли машинӑсене пурне те хута ямалла, вӗсемпе тухӑҫлӑн ӗҫлемелле.

Тырпул вырма тытӑнмалли кунсем инҫе юлмарӗҫ. Кӑҫалхи сезонра, пӗлтӗр пухса кӗртнипе танлаштарсан, кашни комбайнпа 45 процент ытларах ӗҫлемелле. Анчах, калас пулать, республика комбайнсене тата тырпул пухса кӗртмелли ытти машинӑсене юсас ӗҫре юлса пырать. Нумай МТС-сенче юсаман комбайнсем, молотилкӑсемпе жнейкӑсем сахал мар, хӑшпӗр ҫӗрте комбайнерсем, вӗсен помощникӗсем, ҫавӑн пекех ытти кадрсем те ҫитмеҫҫӗ.

Комбайнсене тата тырпул пухса кӗртмелли ытти машинӑсене Куславкка, Вӑрмар, Етӗрне тата ытти хӑшпӗр МТС-сем питӗ вӑраххӑн юсаҫҫӗ.

Совет тата ялхуҫалӑх органӗсем, МТС механизаторӗсемпе колхоз руководителӗсем халӗ хӑйсен мӗнпур тимлӗхне ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерме мобилизацилемелле. Ҫакӑн пек задача тӑрать: МТС-сенчи, колхозсенчи тырпул пухса кӗртмелли ӗҫ хатӗрӗсене ҫывӑх кунсенчех пысӑк пахалӑхпа юсаса ҫитермелле, витнӗ итемсем, сушилкӑсемпе авӑнсем ҫителӗклӗ тумалла, амбарсемпе кӗлетсем ҫителӗклӗ пулмалла. Йывӑр ӗҫсене механизацилесси ҫинчен те халех шухӑшласа пӑхмалла. Кашни МТС-ӑн комбайнсене выртнӑ тырпула, вӑрлӑхлӑх хӑварнӑ курӑксене пухса кӗртме майлаштарса хатӗрлес пулать, бункерти тырра комбайн ӗҫленӗ вӑхӑтрах пушатса илмелле тӑвас пулать.

Элӗк, Пӑрачкав, Кувакино, Ҫӗмӗрле районӗсенчи чылай колхозсем пӗлтӗр комбайн вырнӑ хыҫҫӑн юлакан улӑма вӑхӑтра пухмарӗҫ, ҫапла вара, выльӑх апачӗ нумай ҫухатрӗҫ. Комбайн ҫапса кӑларнӑ улӑма пухса илес ӗҫе кӑҫал пур колхозсенче те ҫийӗнчех туса пымалла. Ӑна пурнӑҫлама колхозсемпе МТС-сенчи пур майсемпе те усӑ курмалла. Кӗскен каласан, комбайн ӗҫленӗ хыҫҫӑн улӑмпа арпана участокран ҫийӗнчех тасатни кирлӗ.

Комбайнсем ӗҫлемелли участоксене халех суйласа илмелле ӗнтӗ. Вӗсене ҫумкурӑксенчен тасатмалла, участоксенчи шӑтӑк-путӑксене пӗтермелле. Колхозсем комбайн агрегачӗсем валли ҫынсем ҫителӗклӗ уйӑрса пама тивӗҫ. МТС тата колхоз руководителӗсен комбайнерсене малтанхи кунсенчен пуҫласах сехет графикӗпе ӗҫлеме пулӑшса тӑмалла.

Колхозниксемпе колхозницӑсене уй-хир ӗҫне пурне те явӑҫтарас пулать. Ӗҫ ресурсӗсемпе тулли усӑ курни кирлӗ. Ку тӗлӗшпе халлӗхе пысӑк ҫитменлӗхсем пур-ха. Акӑ, кӑҫалхи пӗррӗмӗш тапхӑрта Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Мичурин ячӗпе тӑракан колхозра ӗҫкунӗсен минимумне тултарман колхозниксен хисепӗ 57,8 процент, ҫак районти Сталин ячӗпе тӑракан колхозра 69,6 процент шутланать. Ҫакӑн пек тӗслӗхсем ытти районсенчи колхозсенче те пур. Кун пек йӑнӑшсемпе пӗре те килӗшсе ларма юрамасть. Ӗҫлеме пултаракан колхозниксене колхоз производствине пурне те хутшӑнтармалла, тухӑҫлӑ ӗҫлеме вӗсене лайӑх условисем туса памалла.

Нумай колхозсенче ӗҫ нормисене ӳстерсе карса йышӑнаҫҫӗ, малта пыракан колхозниксен ҫитӗнӗвӗсене шута илмеҫҫӗ, производствӑра уйрӑм тата пӗчӗк ушкӑнлӑ сдельщинӑпа ӗҫлессине йӗркелемеҫҫӗ. Ҫаксем ӗнтӗ тырпул пухса кӗртнӗ вӑхӑтра хытах чӑрмантарма пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа та вӑл ҫитменлӗхсене пӗр тӑхтаса тӑмасӑр пӗтермелле.

Пирӗн республикӑри колхозсем, Мари тата Мордва республикисенчи колхозсемпе ӑмӑртӑва тухса, государствӑна тырпул памалли плана октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне тултарма пулнӑ. Хальхи вӑхӑтра хатӗрлев пункчӗсем ҫӗнӗ тырра йышӑнма хатӗрленеҫҫӗ. Анчах ку ӗҫре те ҫитменлӗхсем ҫук мар-ха. Заготзернон Улатӑрти, Йӗпреҫри, Ҫӗрпӳри склачӗсене питӗ ерипен юсаҫҫӗ. Тырӑ йышӑнма хатӗрленес ӗҫре ытти ҫитменлӗхсем те пур.

Ялхуҫалӑхӗпе хатӗрлев органӗсен колхозсене Тӑвӑн ҫӗршыв умӗнчи пӗррӗмӗш тивӗҫе чыслӑн пурнӑҫлама пур условисене те туса памалла. Колхозсен хатӗрлев пункчӗсене тырӑ леҫме транспорт бригадисем тумалла, вӗсене ертсе пыма пуҫаруллӑ колхозниксене уйӑрмалла.

Вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн, йышлӑ та тухӑҫлӑ выльӑх-чӗрлӗх ӳстерессишӗн, кӑҫалхи пур ялхуҫалӑх ӗҫӗсене те вӑхӑтра туса ирттерессишӗн ывӑнма пӗлмесӗр кӗрешер. Ҫакӑ вӑл виҫӗ республика ӑмӑртӑвӗнче Чӑваш республикине малти вырӑна тухма май парӗ.

Г. МАРТЫНОВ,
Чӑваш АССР Ялхуҫалӑхӗпе хатӗрлев министрӗ.

Колхозсенчен пӗлтереҫҫӗ

ҪӖРПӲ. Районти колхозсенче утӑ ҫулас ӗҫ кунтан-кун вӑйланса пырать. Жданов ячӗпе, Калинин ячӗпе тӑракан, «Дружба», «Авангард» тата ытти колхозсем ҫак кунсенче утӑ ҫулса пӗтереҫҫӗ.

Чылай колхозсем государствӑна утӑ пама тытӑнчӗҫ. Жданов ячӗпе тӑракан колхоз виҫӗ кун хушшинче хатӗрлев пунктне 118 центнер, «Новая жизнь» колхоз — 66 центнер, «Авангард» колхоз 59 центнер паха утӑ леҫсе пачӗҫ.

Мичурин ячӗпе, Калинин ячӗпе тӑракан колхозсем те хатӗрлев пунктне утӑ леҫеҫҫӗ.

Х. ЛИСИН.

ШӐХАСАН. «Дружба» колхозра май уйӑхӗнче саман кирпӗч тӑвакансен бригадине организацилерӗҫ. Бригадӑра 33 ҫын, ӑна Я. Никитин юлташ ертсе пырать.

Колхозра саман кирпӗчрен кайӑк-кӗшӗк вити тума тытӑннӑ.

Х. ГОРДЕЕВ.

ИШЛЕЙ. Кирилл Сорокин Молотов ячӗпе тӑракан колхозра 20 ҫул хушши ӗнтӗ конюх пулса ӗҫлет. Халӗ вӑл йӑрсене пӑхать. Сорокин вӗсене вӑхӑтра анатлантарать, шӑварать.

Кӑҫал колхоз 40 тиха илчӗ. Тихасем пурте сывӑ ӳсеҫҫӗ. Хастарлӑ ӗҫленӗшӗн колхоз правленийӗ 65 ҫулхи колхозника темиҫе хутчен те тав тунӑ, хаклӑ парнесем панӑ.

В. КУЗЬМИН.

ВӐРНАР. Районти нумай колхозсем обществӑлла выльӑх-чӗрлӗхе ӑшӑ витесенче хӗл каҫарассишӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе уйрӑмах Хрущев ячӗпе, Жданов ячӗпе, Молотов ячӗпе тӑракан колхозсем лайӑх тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. Ку колхозсенче ҫӗнӗ витесем тума тытӑннӑ, киввисене юсанӑ.

Колхозниксем кормозапарниксене юсама тытӑнчӗҫ. Ҫак енӗпе МТС-ӑн выльӑх-чӗрлӗх фермисенчи ӗҫсене механизацилес енӗпе ӗҫлекен механикӗ Я. Кудрявцев юлташ пысӑк пулӑшу парать.

Н. МИХАЙЛОВ.

ЕЛЧӖК. «Красное знамя» колхоз ҫултан-ҫул аталанса, тӗрекленсе пырать. Обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхӗ, иртнӗ ҫулхисемпе танлаштарсан, нумай ӳснӗ. Колхозӑн 224 сурӑх. Кӑҫал ҫуркунне сурӑхсенчен 360 килограмм ҫӑм касса илнӗ.

Колхозри дояркӑсем пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Иртнӗ ҫулта Л. Сухарева уйрӑм ӗнесенчен 1.680 литр сӗт суса илнӗ. Кӑҫал вӑл 2.000 литртан кая мар сӗт суса илме пулнӑ. Дояркӑсем пурте зоотехника курсӗнчен вӗренсе тухрӗҫ. Халӗ вӗсем выльӑх апачӗ хатӗрлес енӗпе ӗҫлеҫҫӗ.

П. КОРОЛЬКОВ.

Хатӗрленме тытӑнман

КАЛИНИНО. «Родина» колхоз иртнӗ ҫулсенчи пекех кӑҫал та тырпул пухса кӗртме япӑх хатӗрленет.

Кӑҫал 197 гектар ҫинче кӗрхи тырӑсем, 310 гектар ҫинче ҫурхи тырӑсем пухса кӗмелле. Тырӑ вырма тухиччен шутлӑ кунсем юлчӗҫ. Апла пулин те колхозра ялхуҫалӑх машинисене юсама тытӑнман.

Колхозӑн лаша вӑйӗпе авӑн ҫапмалли молотилкӑсем пур, вӗсене те юсама тытӑнман. Веялкӑпа сортировкӑн тата триерӑн уйрӑм пайӗсем ҫитмеҫҫӗ.

Тырӑ хумалли 12 кӗлет пур. Вӗсен тӑррисене витмен, ҫумӑрлӑ вӑхӑтра шыв анать. Икӗ витнӗ итемрен пӗри те хатӗр мар.

Тырпул пухса кӗртнӗ вӑхӑтра ӗҫлеме 40 урапа ытла кирлӗ. Вӗсенчен ҫурри ҫеҫ юсавлӑ. Транспорт бригадине 150 михӗ кирлӗ пулать, халлӗхе 80 михӗ кӑна пур-ха.

Малтан ҫапнӑ тырра государствӑна вӑхӑтра тата пӗр чӑрмавсӑр парса тӑрас ҫӗрте сушилкӑсем пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Анчах колхозра сушилка тӑвасси ҫинчен шухӑшламаҫҫӗ те.

Тырпул пухса кӗртмелли ӗҫ планӗ туса хатӗрлемен. Колхозниксем хӑйсем мӗнле вырӑнта ӗҫлессине пӗлмеҫҫӗ. Колхоз председателӗ Е. Иванов юлташ ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе кирлӗ мерӑсем йышӑнмасть.

Г. МАЛЬЦЕВ.

Колхоз председателӗсемпе ялхуҫалӑх специалисчӗсен семинарӗ

КПСС Первомайски райкомӗпе райсовет исполкомӗ нумай пулмасть Чкаловски районӗнчи «Гвардеец» колхозра колхоз председателӗсемпе ялхуҫалӑх специалисчӗсен пӗр кунлӑх семинарне ирттернӗ.

Семинарта пулнисене «Гвардеец» колхоз председателӗ М. Долгов юлташ колхоз вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче тунӑ ҫитӗнӳсем ҫинчен каласа панӑ. Колхоз председателӗсемпе ялхуҫалӑх специалисчӗсем уйрӑмах колхозра обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес, выльӑх апачӗ хатӗрлес ӗҫсемпе фермӑсенче, выльӑх апачӗсем тумалли культурӑсене акнӑ уй-хирсенче пулса паллашрӗҫ. Вӗсем ҫавӑн пекех пахча ҫимӗҫ туса илес тата сад ӳстерес тӗлӗшпе ӗҫлекен звеносенче пулса, вӗсен ӗҫӗсемпе интересленчӗҫ.

Колхоз председателӗсем, малта пыракан колхозра пулса, обществӑлла хуҫалӑха ӳстермелли ҫакӑн пек майсем кашни колхозрах пуррине курчӗҫ, «Гвардеец» колхозӑн обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тата выльӑх апачӗ хатӗрлес ӗҫри опытне хӑйсен колхозӗсенче те пурнӑҫа кӗртме пулчӗҫ.

А. ТУКМАКОВ.

Тырӑ вырма тухас умӗн

КРАСНОАРМЕЙСКИ. «Коминтерн» колхозӑн кӑҫал кӗрхи тата ҫурхи тырӑсем 281 гектар, ҫӗрулми 25 гектар, выльӑх кӑшманӗ 5 гектар, кантӑр 18 гектар тата ытти культурӑсем те пухса кӗртмелле. Тырпулсене пухса кӗртес ӗҫре МТС машинисемпе анлӑн усӑ курмалла.

Тырӑ вырма тухиччен колхоз ытти ӗҫсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пырать. Утӑ тата клевер ҫулнӑ ҫӗрте куллен 145 ҫын ӗҫлет. Тырпулсемпе пахча ҫимӗҫсене ҫумкурӑксенчен тасатнӑ, ҫӗрулми речӗсем хушшине пӗррӗмӗш хут сухаланӑ.

Колхоз уй-хирӗнче ниҫханхинчен вӑйлӑрах тырпул ҫитӗнет. Ку вӑл колхозниксен ӗҫлес кӑмӑлне тата ытларах ҫӗклет.

Тырпула пухса кӗртме ӗҫ планӗ тунӑ, ӑна колхоз членӗсен пӗрлехи пухӑвӗнче сӳтсе явса ҫирӗплетнӗ. Ӗҫ планӗ тӑрӑх колхозӑн ыраша 7 кун хушшинче, суртрисене 15 кун хушшинче вырса пухмалла. Ку ӗҫе 216 ҫын хутшӑнмалла. Кӗлте кӳрес, авӑн ҫапас, государствӑна тырӑ парас ҫӗрте ӗҫлеме туртӑм вӑйӗ ҫителӗклӗ уйӑрнӑ.

— Тырӑ вырма тухнӑ хыҫҫӑн виҫҫӗмӗш кунӗнче эпир авӑн ҫапма тытӑнатпӑр. Малтан ҫапнӑ типӗ те таса тырра государствӑна паратпӑр. Тырӑ леҫнӗ ҫӗрте автомашинӑпа тата лашасемпе усӑ куратпӑр,—тет колхоз председателӗ И. Ефимов юлташ.

Транспорт бригадин бригадирӗ пулма В. Иванов коммуниста ҫирӗплетнӗ.

Анчах тырпула пухса кӗртме хатӗрленес ӗҫре ҫитменлӗхсем те пур-ха. Колхозра 3 молотилка, 3 веялка, пӗр сортировка пур. Пӗр молотилкине юсаман. Виҫӗ итемрен пӗрне ҫӳп-ҫапсенчен тасатса ҫитермен.

Колхозниксен социализмла ӑмӑртӑвне организацилес ӗҫре хисеп хӑмипе кӑтарту хӑми пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Анчах та паянхи кунччен те вӗсене туса хатӗрлемен.

Колхоз правленийӗпе пуҫламӑш парторганизацин ҫак ҫитменлӗхсене хӑвӑртрах пӗтермелле.

А. ПЕТРОВ.

Чехословаки Республики. Нумай пулмасть Куклены хулинче питӗ пысӑк теплицӑсем тунӑ. Теплицӑсен пӗтӗм лаптӑкӗ—6 пин тӑваткал метр. Вӑй нумай илекен ӗҫсене механизациленӗ.

Теплицӑра ӗҫлекенсем ҫӗнӗ ҫул кунӗсенчен пуҫласа хуласене пахча ҫимӗҫсем парса тӑраҫҫӗ. Халӗ теплицӑсенче помидорсем пиҫсе ҫитеҫҫӗ.

УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: помидорсене шӑвараҫҫӗ.

ЧЕХОСЛОВАКИ ТЕЛЕГРАФ АГЕНТСТВИН фотоӳкерчӗкӗ.

Улан-Батор—Монголи Халӑх Республикин столици

УЛАН-БАТОР, июлӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Июлӗн 11-мӗшӗнче Монголире халӑх революцийӗ пулнӑранпа 32 ҫул ҫитет.

Халӑх влаҫӗ пулнӑранпа ҫӗршыв сӑн-сӑпачӗ тӗпрен улшӑннӑ. Монголи Халӑх Республикин столици Улан-Батор паллама мар улшӑннӑ.

Монголи халӑхӗ хӑйӗн столицине лайӑхлатас тӗлӗшпе пӗтӗм вӑйӗпе пултарулӑхне хурса ӗҫлет. Юлашки пилӗк ҫул хушшинче Улан-Батор хулине илемлетме 87 миллион тугрик (укҫа ячӗ) расход кӑларнӑ. Ҫак вӑхӑт хушшинче 523.440 тӑваткал метр чухлӗ ҫуртсем туса лартнӑ. Хулара правительствӑн 4 хутлӑ ҫурчӗ, музыкӑпа драма театрӗ, государство университечӗ, тӗп кинотеатр, государство библиотеки, кинофабрика, гостиница «Алтай», виҫӗ хутлӑ ҫуртсем туса лартнӑ. Улан-Баторта асфальт сарнӑ анлӑ урамсем, И. В. Сталин ячӗпе, маршал Чойбалсан ячӗпе тӑракан проспектсем пур.

Кӑҫал капитальнӑй ӗҫсем валли хула бюджетӗнчен 40 процент уйӑрса параҫҫӗ.

Улан-Батор, феодалла саманари кичем сӑн-сӑпатне хӑйӗн ҫинчен илсе пӑрахса, малта пыракан культура хули пулса тӑчӗ. Хулара тӑватӑ аслӑ шкул (халӑх революцийӗ пуличчен вӗсем асра та пулман), 8 техникум. Улан-Батор пӗтӗм халӑх хут пӗлекен хула пулса тӑчӗ.

Хулара театрсем, кино, цирк, 78 клуб, хӗрлӗ кӗтессем, 4 музей ӗҫлесе тӑраҫҫӗ. Улан-Баторта 7 хаҫат, 16 журнал тухса тӑрать. Халӑх революцийӗ пуличчен Улан-Батор халӑхӗ ламӑсем патӗнче «сипленсе» пурӑннӑ. Хулара больница пулман. Хальхи вӑхӑтра кунта 13 больница. Вӗсенче 1.692 койка. Ҫавӑн пекех поликлиника, ача ҫуратмалли ҫурт, предприятисенче врач пункчӗсем уҫнӑ. Кунта кумыспа сыватмалли лечебница, сиплӗ шыв тухакан «Рошан» патӗнче курорт уҫнӑ. Хула ҫывӑхӗнче Сонгино, Сильбарайски пядь текен кану ҫурчӗсем уҫнӑ.

Иртнӗ саманара Улан-Баторта промышленность предприятийӗсем пулман. Халӑх влаҫӗ пулса тӑнӑранпа хулара 17 пысӑк предприяти, 10 промысла артелӗ, автотранспорт, чӗртаварсен, снабжени базисем туса хунӑ. Улан-Баторта Совет Союзӗ пулӑшнипе И. В. Сталин ячӗпе тӑракан аш-какай комбиначӗ, маршал Чойбалсан ячӗпе тӑракан промкомбинат, Сухэ-Батор ячӗпе тӑракан энергокомбинат туса лартнӑ. Вӗсем Улан-Батор халӑхӗн мухтавӗ пулса тӑраҫҫӗ.

Пилӗк ҫуллӑх плана пурнӑҫланипе хула промышленноҫӗ пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. 1952 ҫулта, 1947 ҫулхипе танлаштарсан, промышленность министерствине пӑхӑнса тӑракан предприятисем 110,6 процент, апат-ҫимӗҫ промышленность министерствине пӑхӑнса тӑракан предприятисем 107,4 процент чухлӗ продукци панӑ. Ҫак вӑхӑт хушшинче ӗҫ тухӑҫлӑхӗ 20,2 процент ӳснӗ, продукцин хӑйне ларакан хакӗ 17,5 процент чакнӑ. Сӑран туса кӑларасси 46,5 процент, электроэнерги туса кӑларасси виҫҫӗмӗш пай чухлӗ ӳснӗ, колбаса таврашӗ туса кӑларасси ҫурри ытла ӳснӗ. Апат-ҫимӗҫ промышленность предприятийӗсенче ҫӗнӗ йышши продукци туса кӑларма пуҫланӑ.

Улан-Баторти предприятисенче хальхи вӑхӑтра ударник ятне илме тивӗҫлӗ пулнӑ рабочисемпе работницӑсем 2.316 ҫын шутланаҫҫӗ. Вӗсенчен 126 ҫын 5 ҫул хушшинче 15 ҫулхи нормӑна тултарнӑ.

Улан-Баторӑн хӗвеланӑҫ енчи Чойбалсан Ула сӑрчӗ ҫине пысӑк саспаллисемпе «Сывӑ пултӑр Монголипе Совет халӑхӗсем хушшинчи туслӑх!», тесе ҫырса хунӑ. Ку лозунг инҫетренех курӑнать. Ҫакӑ вӑл Монголи Халӑх Республикинчи кашни ӗҫҫыннин шухӑш-туйӑмне палӑртса тӑрать.

Монголи халӑхӗ Совет Союзӗнчи ҫитӗнӳсемпе питӗ интересленет. Улан-Баторти предприятисенче Совет Союзӗнчи малта пыракан ӗҫ меслечӗсене вӗренме шкулсем организациленӗ.

Хулара ӗмӗрсем хушши пӗр йывӑҫ та пулман. Улан-Батор тӑпри ҫинче йывӑҫ ӳсме пултараймасть, тесе шутланӑ ӗлӗк. Халӗ, халӑх демократи влаҫӗ вӑхӑтӗнче, хула пӗтӗмпех симӗс йывӑҫсем хушшинче ларать.

Кӑҫалхи ҫуркунне Улан-Баторта ҫӗнӗрен 45 пин тӗп йывӑҫ, 30 пин тӗп тӗрлӗ ӳсентӑрансем лартса хӑварнӑ. Ҫӗнӗрен виҫӗ сквер тунӑ. Хула хӗрринче йывӑҫ питомникӗ тата чечексем ҫитӗнтерекен оранжерея пулать. Монголи Халӑх Республикин столицине ҫӗнетсе тумалли тӗп план тӑрӑх Улан-Батора малалла лайӑхлатма палӑртнӑ.

В. И. Ленин Сочиненийӗсен 5-мӗш томӗ Румыни чӗлхипе пичетленсе тухнӑ

БУХАРЕСТ, июлӗн 4-мӗшӗ. (ТАСС). Румыни Халӑх Республикинчи политикӑлла литература издательстви В. И. Ленин Сочиненийӗсен 5-мӗш томне Румыни чӗлхипе пичетлесе кӑларнӑ.

Шанхайра И. В. Сталин Сочиненийӗсен пӗррӗмӗш томне ҫырӑнса илеҫҫӗ

ШАНХАЙ, июлӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). «Синьминьбао» хаҫат ҫапла пӗлтерет: июлӗн 5-мӗшӗнче Шанхайра И. В. Сталин Сочиненийӗсен Китай чӗлхипе кӑларнӑ пӗррӗмӗш томне ҫырӑнса илесси пуҫланнӑ.

Ирхине ирех, магазинсене уҫиччен, магазинсем умӗнче пысӑк черетсем пулса тӑнӑ. Кунта Шанхайри фабрикӑсемпе заводсенче ӗҫлекен рабочисем, государство учрежденийӗсемпе суту-илӳ предприятисенче ӗҫлекен служащисем, Ирӗклӗхшӗн кӗрешекен халӑх ҫарӗн салтакӗсемпе офицерӗсем, студентсем тата хула халӑхӗн ытти сийӗсен представителӗсем пулнӑ.

Иосиф Сталин ячӗпе тӑракан Культурӑпа наука дворецне тунӑ ҫӗрте

ВАРШАВА, июлӗн 4-мӗшӗ. (ТАСС). Ҫулталӑк каялла Варшавӑра И. В. Сталин ячӗпе тӑракан Культурӑпа наука дворецӗн ҫӳлӗ ҫурчӗн никӗсне хывнӑ. Унтанпа совет строителӗсем тимӗрпе бетонран тунӑ тӗреклӗ никӗс ҫине хурҫӑ конструкцисенчен виҫӗ пайӗнчен икӗ пайне яхӑн вырнаҫтарса лартнӑ. Хӑватлӑ крансен стрелисем 100 метр ҫӳлӗшне ҫӗкленнӗ.

Хальхи вӑхӑтра хулара ҫӗнӗрен туса лартнӑ урамсенчи ҫуртсем хушшинче ҫак ҫӳлӗ ҫуртӑн хурҫӑ конструкцийӗ тӑсӑлсах курӑнса тӑрать.

Францири коммунистсен ҫӗнтерӗвӗ

ПАРИЖ, июлӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Ҫӳлти Пиреней департаменчӗн префекчӗ йышӑннӑ тӑрӑх, июлӗн 5-мӗшӗнче Тарб хулинче муниципальнӑй советӑн ҫӗнӗ суйлавне ирттернӗ. Ҫак суйлава Тарб хулин мэрӗ пулма коммунист Пейреса суйланӑ пирки муниципальнӑй советниксем—буржуалла партисен членӗсем отставкӑна тухнӑ май ирттермелле тунӑ.

Франс Пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, суйлавра Францири Коммунистсен партийӗ 6.873 сасӑ илнӗ. Ку вӑл пӗтӗм суйлавҫӑсен хисепӗнчен 45 процентӗ пулать. Коммунистсен партийӗн кандидачӗсемшӗн ҫак суйлавра, кӑҫалхи апрелӗн 26-мӗшӗнче пулнӑ суйлаврипе танлаштарсан, 2.114 сасӑ ытларах панӑ. Коммунистсен партийӗ Тарб хулинчи муниципальнӑй советра ҫӗнӗрен тӑватӑ вырӑн йышӑннӑ.

Ли Сын Ман çĕнĕ провокацисем хатĕрлет

Синьхуа агентстви пĕлтерни

ПЕКИН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ ĕнер Кэсонран çапла пĕлтерет:

Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусене чарса лартнăранпа 16 кун иртрĕ ĕнтĕ. США правительстви ирĕк панипе Ли Сын Ман тунă ĕçсем пирки США правительстви мĕн тăвассине пĕтĕм тĕнче сăнаса тăрать. Паян США президенчĕн представителĕ Робертсон Ли Сын Манпа вунпиллĕкмĕш хут канашланă. США правительстви: эпир Ли Сын Мана перемири тума хĕтĕртетпĕр, тет. Анчах тĕрĕссипе вăл Ли Сын Мана перемири ĕçне путлантарса лартма ытларах та ытларах хĕтĕртет.

Ли Сын Ман Çурçĕр Корейăн тыткăнри 25 пин ытла çар çыннисене лагерьсенчен кăларни, вĕсене Кăнтăр Корея çарне илни Америка командованийĕ ирĕк панипе пулни çине кăтартса, корреспондент малалла çапла çырать:

Американецсем ĕç çине çакăн пек пăхнă пирки Ли Сын Ман тата ытларах хăюлланса çитрĕ. Вăл çакăн хыççăн: американецсем «пĕр-пĕрне хÿтĕлемелли пакт» тенĕскерне туса хума сăмах памаççĕ пулсан тата политикăлла конференцие висĕ уйăхлăх срока кăна пымалла тумаççĕ пулсан, эпĕ перемири тăвассипе килĕшместĕп, тесе тата хытăрах кăшкăрма пуçланă. Ли Сын Манăн ăссăр ĕçĕсем американецсене нимĕн чухлĕ те пăшăрхантармаççĕ. Вĕсем, Ли Сын Мана йĕркене кĕртес вырăнне, унпа пĕрле Корейăра мир тăвас ĕçе тата ытларах вăраха яма тăрăшаççĕ. Корейăна пырса çитнĕ хыççăн виççĕмĕш кунне Робертсон Ли Сын Манпа çар союзĕ тума килĕшнĕ. Çак çар союзне Америка сенатĕнче пăхса тухса çирĕплетмелле. Кун пек тума вăхăт нумай кирлĕ. Çавăнпа та Робертсон, Ли Сын Манпа килĕшсе, вăхăтлăха килĕшÿ тума сăмах панă. Çак килĕшÿ тăрăх официальнăй йĕркепе çар союзĕ тăвиччен Ли Сын Мана çар енĕпе пулăшса тăмалла пулать.

Çакăн хыççăн Ли Сын Ман тата ытларах чăрсăрланса çитнĕ. Вăл Пĕрлешÿллĕ Штатсене, политикăлла конференци ĕçе тытăннă хыççăн висĕ уйăх хушшинче те Корейăна Ли Сын Ман кăмăлне килĕшнĕ пек пĕрлештерме май тупмасть пулсан, хăйпе пĕрле çĕнĕрен вăрçă пуçласа яма хĕтĕртет.

Американецсем çакăнпа килĕшесшĕн пулманни çинчен пĕлтернĕ пулсан та, Сеултан пĕлтернĕ тăрăх, Робертсон вăрçа çĕнĕрен пуçласа ярасси çинчен тăракан ыйтăва сÿтсе явма тытăннă.

Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчĕ июлĕн 5-мĕшĕнче Сеултан пĕлтернĕ тăрăх, Робертсон «икĕ пунктлă компромисла план» кăларса тăратнă:

1. Перемири хыççăн пухнă политикăлла конференци 90 кун хушшинче Корейăна мирлĕн пĕрлештересси çинчен тăракан ыйту тăрăх нимĕнле çитĕнÿ те тума пултараймасть пулсан, Пĕрлешÿллĕ Штатсем Кăнтăр Корейăпа пĕрле политикăлла конференцирен ĕçе пăрахса тухса кайма килĕшеççĕ.

2. Конференцирен тухса кайнă хыççăн Пĕрлешÿллĕ Штатсем коммунистсене хирĕç çĕнĕрен вăрçă пуçласа ярасси çинчен тăракан ыйтăва дипломатилле органсенче «сÿтсе яваççĕ».

Американецсем çак «компромисла плана» ыйтăва лайăх татса пани пулать, тесе шутлаççĕ. Анчах ку вăл перемири ĕçне путлантарса лартас тĕлĕшпе Ли Сын Мана киревсĕр ĕçсем тума хавхалантарни кăна пулнине суккăр çын та курмасăр тăма пултарас çук.

Пурне те паллă ĕнтĕ, Пĕрлешÿллĕ Штатсем политикăлла конференцире перемири ĕçĕпе çыхăнса тăман тĕллевсене пурнăçлама тăрăшаççĕ. Вĕсем политикăлла конференцие интересленекен енĕсем ыйтусене калаçусем ирттернипе татса памалли вырăн тесе шутламаççĕ. Робертсон планĕн çак пункчĕ пулас политикăлла конференци кун-çулне, тĕрĕссипе илсен, хăрах енлĕн татса пама хăтланни пулать. Кунта Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Ли Сын Ман пуç пулса тăмалла, вĕсен шучĕпе, политикăлла конференцие хутшăнакан енĕсен Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Ли Сын Ман хыççăн пымалла. Çапла вара политикăлла конференцие пухăниччен путлантарса лартма тăрăшаççĕ.

Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Ли Сын Ман политикăлла конференцие малтанах путлантарса лартма шутлаççĕ пулсан, США Ли Сын Манпа пĕрле вăрçа çĕнĕрен пуçласа ярасси çинчен тăракан ыйтăва сÿтсе явма килĕшни, паллах ĕнтĕ, пысăкрах пĕлтерĕшлĕ ыйту пулса тăрать. Пĕрлешÿллĕ Штатсем Ли Сын Ман хыççăн кайма хатĕр: тыткăнри çар çыннисене «ирĕке кăларнă» хыççăн çар союзĕ тумалла, çар союзĕ тунă хыççăн политикăлла конференцирен тухса каймалла, политикăлла конференцирен тухса кайнă хыççăн çĕнĕрен вăрçă пуçласа ярасси çинчен тăракан ыйтăва Ли Сын Манпа сÿтсе явма тытăнмалла. Çакă вăл Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Ли Сын Ман перемири туса хуриччен çĕнĕрен вăрçă пуçласа яма шутлани çинчен каламасть-и вара?

Робертсон планĕ тăрăх ыйтăва «сÿтсе явмалла» тата «ăна Пĕрлешÿллĕ Штатсен сеначĕн ырламалла» тесе каланисем тĕнчери общественность шухăшне чăн ĕçрен пăрса яма тăрăшни кăна пулать. Пурте пĕлеççĕ, Трумэн висĕ çул каялла хăйĕн интервенци çарĕсене Корейăна кăларса ярас тĕлĕшпе США конгресĕ «ырласса» кĕтсе тăман. Çак икĕ пунктран тăракан план Корейăра перемири тăвассине путлантарса лартас тĕлĕшпе чăннипе пысăк хăрушлăх пулса тăрать.

ПЕКИН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ ĕнер Кэсонран çапла пĕлтерет:

Корейăра перемири тăвассине путлантарса лартма çĕнĕ план хатĕрлеççĕ. Америкăн Корейăри 8-мĕш çарĕн командующийĕ Максуэлл Тэйлор ĕнер çапла каланă: Кăнтăр Корея малалла та вăрçă вăрçма решени йышăнать пулсан, вăл, Тэйлор, Америка çарĕсене фронтран илсе тухма, вĕсем вырăнне Ли Сын Ман çарне тăратма пултарать. Паян вăл хăйĕн мĕнпур корпусĕсен командующийĕсене канашлăва пухнă. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, çак канашлу перемири тăвас пулсан Америка çарĕсене Ли Сын Ман çарĕсемпе улăштармалла тăвас ыйтупа çыхăнса тăрать.

Çав вăхăтрах Интернейшнл ньюс сервис агентствин корреспонденчĕ Токиоран пĕлтернĕ тăрăх, Кларк планĕнчен çакă курăнать: Ли Сын Ман перемири условисене пăхăнма килĕшмест, вăл хăйĕн çарĕсене фронтăн хальхи линийĕ патĕнчен кăнтăр еннелле икĕ çухрăм илсе тухма ирĕк памасть. Анчах та Ли Сын Ман çарĕ «коммунизма хирĕç кĕрешес ĕçре ытла та паха машина пулса тăнине» кура, Пĕрлешÿллĕ Штатсем хальхи вăхăтра Кăнтăр Корея çарне хĕçпăшалсăр тата снаряженисĕр хăварма шутламаççĕ. Ли Сын Ман çарĕ Кларк командованине пăхăнса тăма чарăннă хыççăн та, урăхла каласан, вăл перемири условийĕсене пурнăçлама пăрахнă хыççăн та тата демаркаци линийĕ патĕнчен кăнтăр еннелле чакса тухмасан та, ăна хĕçпăшалсăр тăратса хăварма шутламаççĕ. Америка сенаторĕ Ноуленд çапла каланă: Ли Сын Ман «пĕччен вăрçă вăрçма килĕшет пулсан», Пĕрлешÿллĕ Штатсен ăна снаряжени тата материалсем парса пулăшма чарăнмалла мар.

Ĕçе сăнаса тăракансем çакна кăтартса параççĕ: американецсем Ли Сын Мана пăхмасăрах перемири тăватпăр тесе калаççĕ пулсан, çак план çине уйрăмах тимлĕн пăхни кирлĕ. Ли Сын Ман çарĕ вăрçă вăрçнă вăхăтра, çак план тăрăх, Пĕрлешÿллĕ Штатсем халиччен пекех ăна хĕçпăшал тата снаряжени парса тăмалла пулать. Çакă вăл Ли Сын Мана уççăнах перемири ĕçне путлантарса лартма тата вăрçă ĕçĕсене малалла туса пыма хавхалантарса тăни пулать.

Рейтер агентстви пĕлтерни

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Сеултан çапла пĕлтернĕ:

Кăнтăр Корейăри оборона комитечĕн членĕ паян çапла пĕлтернĕ: Ли Сын Манпа Робертсон хушшинче икĕ эрне хушши пулса пынă калаçусем Ли Сын Ман Корейăри перемирипе килĕшменнине улăштарма пултарайман.

Çак икĕ эрне хушши пынă калаçусем пирки пĕр-пĕрне хирĕçле хыпарсем мĕнле сăлтавран килни çинчен каласа, вăл çакна палăртнă: Ли Сын Ман шучĕпе перемири туни Кăнтăр Корея пĕтсе ларассине пĕлтерет. Американецсем Ли Сын Ман хăйĕн шухăшне пăрахма пултарать тесе шутлани нимĕнпе те никĕсленсе тăмасть. Ли Сын Ман хăйĕн ĕçĕнче стратегилле çак шухăшсене тĕп вырăна хурать: пĕрремĕшĕнчен—Америка çарĕсене Корейăра тытса тăмалла; иккĕмĕшĕнчен—Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Британи империйĕ хушшинчи килĕшменлĕхе пĕтермелле, мĕншĕн тесен вĕсем пĕр-пĕринпе хирĕçсе пурăнни «коммунистсене çырлахтарать»; виççĕмĕшĕнчен — перемири тăвас ĕçри пĕтĕм чăрмавсемшĕн айăпа вăл хăй çине илме хатĕр, çапла вара Корейăра вăрçă ĕçне малалла туса пыма политика енĕпе Пĕрлешÿллĕ Штатсене хутшăнма ирĕк парасшăн.

Комитет членĕ малалла çапла каланă: Ли Сын Ман перемири тăвасси çинчен тăракан ыйту пирки хăй Пĕрлешнĕ нацисемпе килĕшме пултаракан нумай условисем кăларса тăратнă пулсан та, вĕсем коммунистсемшĕн (урăхла каласан—Корейăпа Китай енĕшĕн.—Ред.) нихăш енчен те килĕшÿллĕ пулма пултарайман.

Вăл каланă тăрăх, Ли Сын Ман çар тата политика советникĕсен канашлăвĕнче хăй перемирие хыттăн хирĕç тăрасси çинчен пĕлтернĕ.

Перемири тăвас пулсан, Ли Сын Ман Кăнтăр Корея çарне çурçĕре кĕртсе ярать. Ли Сын Ман шучĕпе американецсем ĕçсем кирек мĕнле килсе тухас пулсан та Кăнтăр Корея çарне пĕтерсе хума ирĕк парас çук. вĕсен ăна ирĕксĕрех пулăшмалла пулать.

Çурçĕр еннелле наступлени тума пуçласси Америка çарĕсем Корейăран тухса кайиччен пуçланать.

Китайпа Англи хушшинчи суту-илÿ çыхăнăвĕсем пирки

ПЕКИН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Пекинра Китайри государствăн импортпа экспорт компанийĕпе Англин суту-илÿ делегацийĕ суту-илÿ килĕшĕвĕ тунă. Çак килĕшÿ тăрăх, кашни çĕршыв пĕр-пĕрне 30-шар миллион кĕренке стерлинг чухлĕ тавар тăратать.

Англи Китая тимĕр-тăмăр, тимĕр япаласем, машинăсем, электротехникăпа хими материалĕсем, станоксем, инструментсем, медицина оборудованийĕ, çыхăнупа транспорт хатĕрĕсем тăратать.

Китай хăй енчен Англие ÿсентăран çăвĕ, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем, сăмарта, минералсем, чей, пурçăн тата ытти япаласем тăратать.

Суту-илÿ килĕшĕвĕ тунипе пĕр вăхăтрах пĕр-пĕрне таварсем тăратмалли контракт тунă.

Австрипе Болгари суту-илÿ договорĕ тунă

ВЕНА, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарипе суту-илÿ договорĕ туни çинчен «Винер цейтунг» хаçат официальнăй йĕркепе пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă.

1954 çулхи июнĕн 30-мĕшĕччченхи срока тунă çак договор тăрăх, икĕ çĕршыв пĕр-пĕрне 11-шер миллион долларлăха яхăн тавар сутаççĕ.

Болгари Австрие тырă, выльăх апачĕ, табак тата ытти таварсем тăратать.

Австри хăй енчен Болгарие хурçă, прокат, электрооборудовани, сăрт-ту промышленноçĕ валли оборудовани, крансем, транспорт оборудованийĕ, металлурги промышленноçĕпе йывăç каскалакан промышленность валли станоксем тăратать.

Хĕвеланăç Германири хресченсен съезчĕ

БЕРЛИН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Кельн хулинче, нимĕçсен пĕрлĕхшĕн, миршĕн тата ирĕклĕхшĕн кĕрешекен союзĕ пуçарнипе, Хĕвеланăç Германири хресченсен съезчĕ пулса иртнĕ. Съезда Хĕвеланăç Германири хресченсемпе вăрман хуçалăх работникĕсен представителĕсем 400 çынна яхăн пухăннă.

Съездра тухса калакансем Аденауэр правительстви хресченсене хирĕçле политика тытса пынине сивленĕ, мир, пĕрлĕх тата халăх ырлăхĕн правительстви туса хурас тĕллевпе çитес суйлавра Аденауэр правительствине сирпĕтсе антарма чĕннĕ.

Съездра нимĕçсен пĕрлĕхшĕн, миршĕн тата ирĕклĕхшĕн кĕрешекен союзĕ хатĕрленĕ аграрлă программăна йышăннă.

Съезд ĕçĕсем вĕçленнĕ хыççăн Кельнра пысăк митинг пулса иртнĕ. Митинга съезд делегачĕсем тата хула халăхĕ пухăннă. Митингра И. Вирт тата В. Эльфес сăмах тухса каланă.

Финляндири ĕççыннисем демократилле правительство туса хума ыйтаççĕ

ХЕЛЬСИНКИ, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, çĕршыври ĕççыннисем хушшинче государство договорĕсене тытса пыма пултаракан, мирлĕ политика тата Совет Союзĕпе ырă кÿршĕллĕ политика тытса пыма пултаракан, ĕççыннисен материальнăй пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшма пултаракан правительство туса хурассишĕн кĕрешÿ вăйланса пырать.

Çĕршывăн тĕрлĕ пайĕсенчи предприятисенче, профсоюзсемпе ытти организацисенче пухусем пулса иртеççĕ. Пухусенче ĕççыннисем мир правительстви туса хума ыйтаççĕ. Хельсинкири «Конесилта» заводĕнчи профсоюз организацийĕ, пухура правительство кризисĕ пирки çĕршывра пулса тăнă лару-тăру çинчен сÿтсе явса, республика президенчĕ патне çыру яма йышăннă. Çырура президент гражданесене ĕç пама тата мирлĕ политика тытса пыма пултаракан правительство туса хума пулăшасса шанса каланă.

Хельсинки хулинчи строительство фирмисенчен пĕринче ĕçлекен рабочисем республика президенчĕ патне янă çырура çапла каланă: ĕççыннисем Финляндии халăхĕн домократиллĕ союзĕ хутшăнакан правительствăна кăна ырлаççĕ.

Совет баскетболисчĕсен çĕнтерĕвĕ

БРЮССЕЛЬ, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Брюссельре тухса тăракан «Спор» хаçат çапла пĕлтерет: июлĕн 6-мĕшĕнче совет баскетболисчĕсем Бельгири чи вăйлă командăпа—«Хура шуйтансем» текен командăпа тĕл пулса вылянă.

Вăйă совет баскетболисчĕсем 77:43 шутпа çĕнтернипе вĕçленнĕ.

БРЮССЕЛЬ, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Июлĕн 7-мĕшĕнче касхине Льеж хулинче совет баскетболисчĕсем юлашки хут вылянă. Совет спортсменĕсем Льеж хулинчи командăна 78 : 44 шутпа çĕнтернĕ. Курма пынă çынсем совет баскетболисчĕсене ăшшăн саламланă.

Совет баскетболисчĕсен команди Бельгире пулнă вăхăтра Бельги баскетболисчĕсемпе 7 хутчен тĕл пулса вылянă, кашнинчех Бельги спортсменĕсене çĕнтерсе, хăйсен ăсталăхне кăтартнă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ июлĕн 7-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче фронтсенче улшăнусем пулман.

Июлĕн 7-мĕшĕ уменхи кас Америка самолечĕсем Кăнтăр Пхенан провинцийĕнчи Мундок уездĕнчи ялсем çине тискеррĕн тапăннă. Вуншар çын вилнĕ. Уйри тырпула пысăк сиен кÿнĕ.

ПХЕНЬЯН, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ июлĕн 8-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Халăх çарĕн чаçĕсем Коранхори районĕнче тата Йоньчхонран хĕвеланăç енче тăшмана хирĕç пĕчĕк çапăçусем иртернĕ.

Самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 2 самолетне персе ÿкернĕ, 2 самолетне сиенленĕ.

Суд

Вăрă-хурахсемпе бандитсене тивĕçлипе айăпланă

1952 çулта кĕрхунне Канаш районĕнчи Çĕнĕ Йăлмачча вăрă-хурахсен шайкки организациленнĕ. Ăна организацилекенсем киномеханик пулса ĕçленĕ Георгий Михайлович Костылев тата моторист пулнă Вениамин Степанович Шемякин (Канашри кинофикаци пайĕнче ĕçленĕскерсем) пулнă. Хăйсен ушкăнне Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз почтальонне Герман Федорович Федорова тата Алексей Степанович Степанов колхозника кĕртсе, вĕсем граждансен пурлăхĕпе государство пурлăхне саратма тытăннă.

Вăрă-хурахсен преступникла шайкки кĕске вăхăт хушшинчех висĕ çын хваттерне саратнă, кинофикаци пайĕнчи пурлăхсене вăрласа тухнă. Кăçалхи март уйăхĕнче бандитсем Йăлмаччари ватă карчăка М. М. Мироновăна тискеррĕн вĕлернĕ, унăн хваттерĕнчи япаласене вăрласа тухнă.

Судпа следстви органĕсем тивĕçлĕ мерăсем йышăннă май çак вăрă-бандитсене тытса хупнă, вĕсене тивĕçлипе ответ тыттарма ĕçе Чăваш АССР Верховнăй Судне панă.

Чăваш АССР Верховнăй Сучĕн уголовнăй ĕçсен коллегийĕ вăрă-бандитсене айăплас ĕçе июнĕн 22—24-мĕшĕсенче Канаш районĕнче пăхса тухнă. Суд Костылевпа Федорова 25-шер çул хушши, Шемякина 20 çул хушши тата Степанова 10 çул хушши ĕçлесе юсанмалли лагерьсенче усрама, пурлăхĕсене конфискацилеме тата айăпланнă вăхăт тухнă хыççăн пурне те суйлав прависĕр хăварма приговор йышăннă.

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТРА

Умстатья. — Массăлла-политикăлла ĕçе анлăрах сарар.

Тăван çĕршывра.

Политикăлла агитаци ĕçне анлăрах тата тĕплĕрех туса пырар (Улатăрти пăравус юсакан заводри агитаторсен ĕç опычĕ çинчен).

Чăваш АССР Министрĕсен Советĕнче. Районсем тата çул-йĕр участокĕсем çул-йĕр строительстви тĕлĕшпе иккĕмĕш кварталта ăмăртса ĕçлени çинчен.

ВРАЧ КАНАШĔСЕМ: Л. Скворцов. — Вар тифĕпе тата дезинтерипе чирлессинчен мĕнле сыхланмалла.

Е. Тихонова, М. Осипов:—Чăхсене уйра усрасси.

А. Малышев.—Çĕрулмипе пахча çимĕçсем хатĕрлес ĕçе лайăх иртерер.

СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче.

Вырăнти тата урăх çĕршывсенчен килнĕ хыпарсем.

Редактор заместителĕ М. Н. ЯКИМОВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — Кизел хулинчи драма театрĕн гастролĕсем. Июлĕн 10-мĕшĕнче **«Семья»** (4 пайлă пьеса).

Спектакль 20 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«РОДИНА» — июлĕн 10-мĕшĕпе 11-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче киносборник. Сборника кĕрекен фильмсем: **«Дружба»**, **«Девочка в цирке»**, **«Сказка у старого дуба»**, **«Высокая горка»**. Ытти сеанссенче—**«В одном универмаге»**, сеанссем 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

Тырпула пушартан сыхлăр!

Тырпула вырнă тата авăн çапнă чухне пушартан сыхлама трактористсем, комбайнерсем, машинистсем, мотористсем, шоферсем асра тытмалли тата пурнăçласа пымалли инструкци

Тырă вырнă тата авăн çапнă чухне пушартан сыхланма çак правилăсене асра тытса пурнăçласа пымалла:

1. Тракторсен, комбайнсен, автомашинăсен зажиганипе карбюраци системине тĕплĕн тĕрĕслесе тухса юсас пулать; çапла юсанă хыççăн тин машинăсемпе ĕçе тытăнма юрать. Глушительте шартлатни, унтан хĕлхем тухни ан пултăр.

Горючи тултармалли бак юсавлă мар, трубкăсенчен горючи тата çу юхать пулсан, çавăн пек двигательпе тырпул пухса кĕртнĕ тата авăн çапнă çĕрте ĕçлеме юрамасть.

Комбайнпа ĕçленĕ чухне отстойникпе карбюратора, горючи юхни ан пултăр тесе, сăнаса тăмалла; çавăн пекех тĕтĕм тухмалли трубана коллекторпа пĕрлештерекен тыткăчсем юсавлă пулччăр тесе сăнаса тăрас пулать.

2. Автомобильсен, тракторсен, комбайнсен электропроводкин лайăх изоляци пулмалла, электропроводкăна машинăсен пайĕсем çумне çирĕп çыпăçтармалла. Моторсене таса тытмалла.

3. Тракторсен, автомашинăсен, комбайнсен, локомобильсен тĕтĕм тухмалли трубисем çумĕнче хĕлхем сÿнтермеллисем пулмалла.

4. Трактортан кăкарса ĕçлемелли комбайнсен битерĕсемпе пиккерĕсен валĕсене вĕсем çине явăнакан улăмран тасатса тăмалла.

5. Хăмăл тата вырман тырă çунма пуçлани ан пултăр тесе, автомашинăсемпе тракторсен тĕтĕм тухмалли трубисемпе глушителĕсене листаллă асбестпа чĕркемелле те тимĕр труба тăхăнтармалла, пралукпа хытă çыхса хумалла.

6. Двигатель ытлашши хĕрсе кайни ан пултăр. Двигателе ытлашши вĕрилентерекен сăлтавсене çийĕнчех пĕтермелле. двигателе сивĕтекен система тĕрĕс ĕçленине сăнаса тăмалла.

7. Тракторсен, автомашинăсен, комбайнсен, тĕтĕм тухмалли трубисенчен, глушительсенчен тата хĕлхем сÿнтермеллисенчен çунакан хăрăм вĕçсе тухни ан пултăр тесе, вĕсене хăрăмран лайăх тасатса тăмалла.

8. Комбайнсен двигателĕсем çине улăм лекмелле мар тăвас пулать. «Коммунар» комбайнсен двигателĕсен испарителĕсене тата тĕтĕм тухмалли трубисен аялти пайне сеткăран тунă (сетка шăтă ĕсем 2 мм пулмалла) кожухпа витмелле, сеткăпа испарительсем хушшинче 5—7 см. чухлĕ вырăн хăвармалла. Самоходнăй комбайнсен двигателĕсене хедер енчен пĕтĕмпех сеткăпа (сетка шăтăкĕсем 2 мм. пулмалла) витсе хумалла.

9. Кунсăр пуçне, комбайнсен моторĕсен магнето çинче тимĕртен тунă кожух пулмалла: ку вăл карбюраторти горючи магнето контакчĕсем çине лексрен сыхлама кирлĕ. Прокладка тухса ÿкни ан пултăр тесе, тĕтĕм тухмалли труба флянцинче втулка пулмалла. Комбайнсен йышăнакан битерĕсен валĕсем çине улăм явăнни ан пултăр тесе, çав валсем çине металран тунă втулкăсем вырнаçтарса лартаççĕ; валпа втулка хушшинче 2 мм. хушă хăвармалла.

«Коммунар» комбайнсен карбюраторĕсем айне тата самоходнăй комбайнсен бензин насусĕсем айне тăкăнакан горючие пухмалли вырнаçтарса лартаççĕ.

10. «С-4» самоходнăй комбайн хыçне металран тунă пысăк сăнчăр кăкарса ямалла, сăнчăрăн 15—30 сыпăкĕ çĕр çинче сĕтĕрĕнсе пытăр (заземлени).

11. Комбайнсене сыхлакан çынсăр нисăта та хăварма юрамасть.

Тракторсемпе комбайнсене ĕç пĕтнĕ хыççăн ана çинчех хăварма юрамасть. Çĕр касма тăратнă чухне пĕр ушкăнта 5 машинăран ытла пулмалла мар, тракторсем хушшине 2 метртан кая мар, комбайнсем хушшине 20 метртан кая мар вырăн хăвармалла. Тракторсен ушкăнĕсем хушшинче 20 метртан кая мар, комбайнсен ушкăнĕсем хушшинче 40 метртан кая мар вырăн хăвармалла.

12. Итемсем çинче молотилкăсене тата ытти машинăсене ĕçлеттерме двигательсем вырнаçтарса лартнă чухне, çак правилăсене пурнăçламалла:

а) двигатель лартмалли вырăнти хăмăла, типсе кайнă курăксене тата ыттисене те тасатмалла. Локомобиль кăмакин анине çил вĕрнĕ енчен щитсемпе хÿтĕлемелле;

б) локомобильсен трубисем çинче хĕлхем тухма чаракан сеткăсем пулмалла,—сетка шăтăкĕсем 5 мм ытла ан пулччăр;

в) локомобиль кăмакинче çунтарма улăм тата торф çунтарма кирлĕ чухлĕ çеç илсе пырса тăмалла. Кăмака патне улăм купаласа хума юрамасть. Кăмакаран тухса ÿкекен кăварлă кĕле тата хĕлхемсене сÿнтерме шыв витри тата швабра пулмалла, вĕсене двигателе яма шыв тытакан пичке патĕнче усрамалла;

г) тракторсене тĕтĕм тухмалли труба капансем еннелле мар, тепĕр еннелле пулмалла лартас пулать. Çав труба çине тимĕртен ятарласа тунă кукăр труба тăхăнтармалла, труба вĕçне пичкери шыва чиксе хумалла. Шывран газ тухма пичкене тимĕр труба чиксе лартаççĕ, ку труба тракторăн тĕтĕм тухмалли трубинчен пысăкрах (диаметрĕ 10 сантиметртан кая мар) пулмалла. Икĕ трубине те çунман материалсемпе чĕркесе пичкерен уйăраççĕ;

д) пĕр вырăнта ĕçлеме вырнаçтарса лартнă трактора горючи янă чухне моторне ĕçлеме чараççĕ, капотне хупаççĕ, горючие насуслă тата шланглă урапапа илсе пырса яраççĕ; ун пек урапа çук пулсан, горючи янă чухне варинкепе усă кураççĕ; вара горючие хупă бидона тултарса илсе пыраççĕ. Горючи ярас ĕçе çĕрлехи вăхăтра тума юрамасть. Хăш чухне çĕрлехи вăхăтра горючи ямалла пулсан, трактор фарисемпе (урăх тракторăннипе) е электричество хунарĕсемпе çутатса тăмалла.

13. Комбайнсене, автомобильсене тата тракторсене (пĕр вырăнта ĕçлеме вырнаçтарса лартнисемсĕр пуçне) итем çинче е тырă вырнă çĕртех горючи яма юрамасть. Горючи яма машинăсене çул çине е сухаланă çĕр çине илсе тухас пулать. Çĕрлехи вăхăтра горючи ямалла пулсан, электричество хунарĕсемпе, трактор е автомашина фарисемпе çутатса тăмалла.

Горючи янă чухне шăрпăкпа, краççын лампиллĕ хунарпа е урăх мĕн те пулин çунтарса çутатса тăма юрамасть.

14. Тракторпа ĕçлеттерекен кашни молотилкăна сăнчăрпа е троспа трактортан кăкарса хумалла, — улăма ăнсăртран вут хыпсан, унтан молотилкăна хăвăрт куçарса каймалла пултăр. Локомобильпе ĕçлекен молотилка тата локомобиль çумĕнче кăкарса турттарса каймалли трос е сăнчăр пулмалла.

15. Авăн çапмалли агрегатсен пĕр-пĕринпе сăтăрăнакан пайĕсене, вĕсене пăхмалли правилăсем тăрăх, вăхăтра çу сĕрсе тăмалла.

16. Электроэнергипе усă курса авăн çапнă чухне электричествăпа ĕçлекен агрегатсене пăхмалли правилăсене пăхăнса ĕçлемелле:

а) электричество токĕ çÿрекен пайсен тата проводсен шанчăклă изоляци пулмалла;

б) электрооборудованин хĕлхем кăларма пултаракан пур вырăнĕсене те тусан, улăм тата ытти те лекмелле мар тăвас пулать;

в) электрооборудованин лайăх предохранительсем пулмалла.

Чăваш АССР Шалти ĕçсен министерствин пушартан сыхланас тĕлĕшпе ĕçлекен пайĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01169 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.